Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Апрель 14 Ытларикун № 75 (8984)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсен пленумĕсем (1 стр.).
Май уявĕ умĕнхи ăмăрту (1 стр.).
СТАЛИН ПУЛНА ВЫРАНСЕНЧЕ: Сталин пек пурăнмалла, сталинла ĕçлемелле (Т. Лисковская статьи (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНАÇĔ: Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ (2 стр.).
Çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ирттерер! (2 стр.).
А. Пикулев.—Çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле (2 стр.).
И. Бугаев, Т. Майоров.—Вăрманпромхоз ĕçне лайăхлатмалла (3 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ: Н. Барминов. — Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлатпăр (3 стр.).
ТЕАТР: Г. Лисин.—«Çĕр çинчи рай» (3 стр.).
Совет Союзĕпе Швеци хушшинчи суту-илÿ çинчен (4 стр.).
Италири хĕрарăмсен съездĕнче (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Паньмыньчжоньри каласусем (4 стр.).
Концентрационнăй лагерьсенчĕ пулнă çынсене ирĕке кăларнă куна паллă туни (4 стр.).

Çураки тата районти хаçатсен задачисем

Çуркунне çитрĕ. Çурхи уй-хир ĕçĕсем сарăлнăçемĕн сарăлса пыраççĕ. Пирĕн республикăри нумай колхозсем кĕрхи тырăсен калчисене апат параççĕ, çывăх вăхăтрах пур çĕрте те пĕрчĕллĕ тырăсем акас ĕç пуçланать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955-мĕш çулсенче аталантарма панă директивăсенчен пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне 1953 çулта пысăк та ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Кăçал мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне малалла ÿстермелле, тырпул ытларах туса илмелле, обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне çĕклемелле, укçа-тенкĕ тупăшĕсем нумайрах илмелле.

Республикăри хаçатсенче апрелĕн 12-мĕшĕнче Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксем, колхозницăсем, МТС работникĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем илнĕ обязательствăсем пичетленсе тухрĕç. Пирĕн колхозсен, совхозсен тата машина-трактор станцийĕсен çак обязательствăсене чыслăн пурнăçлама, тăванла вырăс республики — Мордва, Чăваш тата Мари республикисем хушшинчи социализмла ăмăртура мала тухма пур майсем те пур.

Пирĕн парти организацийĕсем умĕнче ответлă задача тăрать, вĕсен çуракине вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн пыракан кĕрешÿре совет тата ялхуçалăх органĕсен ответлăхĕпе пуçарулăхне пĕрмаях ÿстерсе пымалла. Çак задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре пирĕн районсенчи хаçатсем паллă вырăн йышăнма тивĕçлĕ.

Çуракине — ялхуçалăхĕнчи ответлă тапхăрсенчен пĕрне — ирттернĕ вăхăтра МТС-сенчи машинăсемпе тракторсен паркĕпе, колхозсенчи туртăм вăйĕпе туллин усă курас, уй-хир бригадисемпе трактор бригадисенче ĕçе тĕрĕс организацилес, уй-хир ĕçĕсенче агротехника правилисене çирĕппĕн пурнăçласа пырас, вăйлă тырпул мастерĕсен опычĕпе анлăн усă курас ыйтусем тĕп ыйтусем пулса тăраççĕ. Çак ыйтусене районти хаçатсен страницисенче тивĕçлипе çутатса тăмалла.

Çураки ăнăçлăхне кадрсем, чи малтанах механизаторсен кадрĕсем, татса параççĕ. Кăçал пирĕн республикăри машина-трактор станцийĕсем тракторсемпе, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 33 процент ытларах ĕç тумалла. Ĕç вăйĕпе производство хатĕрĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, кашни трактор бригадинче ĕçе икшер сменăпа тата сехет тăрăх ĕçлемелли графикпа йĕркелемелле. Кашни тракторист сменăри ĕç нормине тултарса пымалла тăвас пулать. Районти хаçатсен тивĕçĕ—чи лайăх трактор бригадисен, малта пыракан механизаторсен опытне анлăн кăтартакан трибунăсем пулса тăрасси.

Уй-хир ĕçĕсене паха туса ирттерни — вăйлă тырпул туса илмелли чи кирлĕ условии. Районти хаçатсен çуракин малтанхи кунĕсенчен пуçласах уй-хир ĕçĕсене мĕнле пахалăхпа тунине тимлĕн тĕрĕслесе тăмалла, лайăх ĕçлекенсен опытне çутатнипе пĕрлех, ĕçе ячĕшĕн çеç тăвакансене, агротехника правилисене пăсса ĕçлекен çынсене тăрă шыв çине кăлармалла, уй-хир ĕçĕсене вăраха тăсса пынине тата çураки планне тĕрлĕ культурăсем тăрăх пĕр пек тикĕс тултарса пыманнине хирĕç кĕрешмелле.

Уй-хир ĕçĕсен чирвайхи кунĕсем çинчен çырнă чухне хăшпĕр районсенчи хаçатсем колхозсенче агротехника требованийĕсене пăснисене асăрхамасăр иртсе каяççĕ. Шăхасан районĕнчи Сталин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕсенче тата Калинино районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозра малтанхи кунсенче клевера алăпа акнă пулнă. Асăннă районсен хаçачĕсем—«Вăйлă тырпулшăн» тата «Сталин çулĕпе» хаçатсем вара, агротехника правилисене çакăн пек пăсакансене тăрă шыв çине кăларас вырăнне, хăйсен страницисенче çак фактсене уй-хир ĕçĕсенчи çитĕнÿ пек илсе кăтартнă.

Çуракине пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн кĕрешесси вăл — чи малтанах, тăпрара нÿрĕ ытларах упраса хăварассишĕн кĕрешмеллине пĕлтерет. Республикăри мĕнпур колхозсемпе МТС-сен çурхи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра пуçăнмалла. Анчах та чылай колхозсем уй-хир ĕçĕсене сарса пыма васкамаççĕ-ха; кĕрхи тырă калчине апат парас тата ытти ĕçсене вăраха хăварса пыраççĕ. Апла пулин те нумай районсенчи хаçатсем кун пирки шарламаççĕ, уйрăм колхозсем çаврăнăçусăр ĕçленине критиклемеççĕ.

Халĕ ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсен колхозниксемпе механизаторсен, ялхуçалăх специалисчĕсен социализмла ăмăртăвне анлăн сарассишĕн, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешÿ пуçарса пымалла. Колхозсемпе машина-трактор станцийĕсенчи парторганизацисен тырпул туса илес тĕллĕшпе ĕçлекен кашни çынна хавхалантарса пымалла, агитаторăн бригадăсене кăна мар, кашни колхозник, кашни тракторист патне çитмелле. Хаçатсен тивĕçĕ — парти организацийĕсен çуракинчи организаторла тата массăлла-политикăлла ĕçĕсен опытне пĕтĕçтерсе сарасси, ял ĕçченĕсене ĕçри йывăрлăхсемпе кĕрешме тата пуçарулăха аталантарма пулăшасси, колхозниксемпе механизаторсене обществăлла хуçалăха пур енлĕн аталантарма тата социализмла пурлăха упраса тăма, государство умĕнчи обязательствăсене йĕркеллĕн те ыра кăмăлпа пурнăçлама вĕрентсе воспитани парасси пулать.

Çуракине ăнăçлă ирттерес ĕçре стена хаçачĕсемпе боевой листоксем те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Парти райкомĕсен ку ĕçе ертсе пырассине лайăхлатмалла, стена хаçачĕне боевой листок кашни уй-хир тата трактор бригадинче йĕркеллĕ те вăхăтра тухса тăмалла тăвас пулать. Районсенчи хаçатсен хăйсен страницисенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксен обзорĕсене тăтăшах пичетлемелле, стена хаçачĕсен редколлегийĕсемпе боевой листоксен редакторĕсене ĕçлĕ канашсемпе тата кăтартусемпе пĕрмаях пулăшса тăмалла.

КПСС райкомĕсем хаçатсене кулленкун тата конкретлă ертсе пыма тивĕçлĕ, хаçатсен содержанине лайăхлатма, редакцисене пултаруллă кадрсемпе çирĕплетме тăрăшмалла, хаçат редакцийĕсем редакци тулашĕнчи авторсен активĕпе ĕçлессине пур майсемпе те лайăхлатмалла, ĕççынисен çырăвĕсем çине тимсĕр пăхнисене пĕтерсе пымалла.

Колхоз ĕçченĕсем хăйсен мĕнпур вăйне партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхне малалла çĕклес енĕпе лартнă задачăсене пурнăçлама параççĕ. Районсенчи хаçатсен чыслă тивĕçĕ — колхозниксене, колхозницăсене, МТС работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене çуракине чи лайăх вăхăтра ирттерме, çапла вара вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварма мобилизацилесси пулать.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

И. В. Сталинăн генилле произведенине вĕренеççĕ

ЛЕНИНГРАД, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Скороход» фабрикăри рабочисемпе служащисем 2.500 çын ытла семинарсенче, кружоксенче тата харпăр хăй тĕллĕн И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренеççĕ. Фабрикăра И. В. Сталин произведенийĕ тăрăх лекцисем организациленĕ.

И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ тăрăх теорилле конференци ăнăçлă иртнĕ. К. Н. Левицкий инженер, цех начальникĕ В. В. Сокольский тата ыттисем те докладсем туса панă. Фабрикăра çакăн пек конференцисем кăçал татах ирттерме палăртнă.

Сехет графикĕ тăрăх

КИЕВ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Киев облаçĕнчи колхозсем тĕштырăсем акаççĕ. Уй-хирте кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, трактор агрегачĕсем чылай ытларах ĕçлеççĕ. Механизаци шкулĕсемпе МТС-сем çумĕнчи курссенче хĕллехи вăхăтра 4,5 пин тракторист вĕрентсе хатĕрленĕ. Çапла вара çураки пуçлансанах трактор агрегачĕсемпе икшер сменăпа ĕçлессине организацилеме май килнĕ.

Кашни гектартан 120 пăт тĕштырă тата кашни гектартан 230 центнер сахăр кăшманĕ туса илессишĕн кĕрешсе, механизаторсем колхозниксемпе пĕрле çуракине кĕске срокра ирттерме тăрăшаççĕ.

Кăçал трактористсем нумайăшĕ сехет графикĕ тăрăх ĕçлеççĕ, машинăсемпе ытларах усă курма тăрăшаççĕ. Облаçра пĕр пине яхăн трактор бригадисем сехет графикĕ тăрăх ĕçлеççĕ.

Хуласем лайăхланса пыраççĕ

БАКУ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Азербайджанра хуласемпе район центрĕсене лайăхлатас тĕллĕшпе нумай ĕçлеççĕ. Сăрт-ту çинчи районсен центрĕсенче—Мартунире тата Гадрутра çĕнĕ электростанцисем тума пуçланă. Хачмасра водопровод туса пĕтернĕ. Кăçалхи çул республикăри хуласенче 11 гостиница тăваççĕ, ку вăл, иртнĕ пилĕк çул хушшинче тунипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах пулать. Евлахра пысăк гостиница лартаççĕ. Çак гостиницăна çÿлĕ сăрт çинчи Исти-Су курорта каякансем валли лартма йышăннă.

Гянджи облаçĕн центрĕнче — Кировабадра строительство ĕçĕ анлăн сарăлнă. Кунта пурăнмалли çуртсем нумай лартаççĕ, облисполком валли пысăк çурт, гостиница, сыватакан учрежденисен хулине тăваççĕ. Водопровода аслăлатаççĕ, урамсене асфальт сараççĕ.

Хуласемпе район центрĕсенче çĕнĕрен садсем чĕртеççĕ.

Май уявĕ умĕнхи вахтăра

ЗАПОРОЖЬЕ. Хулари предприятисенче Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăрту сарăлса пырать.

«Запорожсталь» заводĕнчи металлургсем оборудованипе лайăхрах усă курассишĕн тата продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешеççĕ. Сталевар Торгашев юлташпа унпа улшăнса ĕçлекен Косяковпа Заяц юлташсем пысăк çитĕнÿ тунă. Вĕсем кăçалхи çул пуçланнăранпа планран ирттерсе 7 пин тонна яхăн металл шăратса кăларнă.

Трансформатор завочĕн коллективĕ те илнĕ обязательствăна ăнăçлă пурнăçласа пырать. Сборочнăй цех пысăк хăватлă трансформатора срокчен пухса пĕтернĕ. Çав агрегата хамăр çĕршыври пысăк энергосистемăсенчен пĕрин валли тунă.

Халĕ заводра Куйбышев гидроэлектростанцийĕ валли хăватлă трансформаторсем тума хатĕрленеççĕ.

«Днепроспецсталь», Ленин ячĕпе тăракан электростанци тата ытти промышленность предприятийĕсен коллективĕсем те Май уявне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

КАРАГАНДА. Караганда чугун çулĕн Караганда — Анар участокĕ — чи пысăк участоксенчен пĕри. Карагандара кăларнă çĕр кăмрăкне, Казахстанра шăратнă хурçăна тата тимĕр тăприне тиенĕ поездсем кунтан Урала, Атăл леш енне, Çĕпĕре, Алтая тата Вăтам Азие каяççĕ.

Çак участокра поездсене яланах икшер паравус туртса пынă. Май уявĕ умĕнхи вахта пуçланнă кунсенче Караганда-Сортировочная депори машинист Василий Пархоменко коммунист йывăр тиенĕ поездсене пĕр паравуспах илсе кайма ăмăрту пуçарса янă. Унăн бригади (бригадăра çамрăксем ĕçлеççĕ) нормăран ирттерсе 1,5 хут йывăртарах тиенĕ поезда пĕр паравуспах пысăк хăвăртлăхпа илсе кайнă.

Халĕ ĕнтĕ ытти машинистсем те — Колобовников, Смирнов, Калашников, Кравец тата ытти юлташсем йывăр тиенĕ поездсене пĕр паравуспах илсе çÿреççĕ. Май уявĕ умĕнхи вахтана тăнăранпа Караганда-Сортировочная деповĕнче 20 паравус ĕçрен пушанна.

Апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС).

Каховка гидроузелне тунă çĕрте

НОВАЯ КАХОВКА, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Каховка гидроузелĕн суднăсем иртмелли шлюзне тăвакансем шлюз камери тĕпĕн иккĕмĕш блокне бетон хурса пĕтернĕ. Пĕрремĕш блока бетон хунипе танлаштарсан, иккĕмĕш блока 9 сехет маларах бетон хурса пĕтернĕ.

Бетон хуракансен Демченко, Ермошин тата Шульга юлташсем ертсе пыракан бригадисем механизациленĕ бетон заводĕн коллективĕпе, автомашинăсен шоферĕсемпе тата электрокран экипажĕпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Асăннă бригадăсем, обязательство тăрăх кашни сехетре 25-шер кубометр бетон хурас вырăнне, 29-шар кубометр бетон хураççĕ.

Ăмăртура бетон завочĕн коллективĕ пысăк çитĕнÿ тунă. Вăл кашни сехетре нормăра кăтартнинчен ирттерсе 6-шар кубометр бетон парса тăрать.

Китсем тытакан «Слава» флотили Антарктикăра китсем тытать.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: кит тытакансем кит патĕнче. Кит тăршшĕ—27 метр, йывăрăшĕ—100 тонна ытла.
С. КОГАН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сулă юхтарас ĕçе вăйлатмалла

ШĂМĂРШĂ, апрелĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозăн 66 пин кубометр йывăç шыв тăрăх ăсатмалла. Паянхи куна 21 пин кубометр йывăçа шыва пăрахнă. Упамса юханшывĕнчен Шурă Паснана 4 пин кубометр пĕрене юхтарса кăларнă. Тасеевпа Мухамедзянов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем кунĕн-çĕрĕн хастарлă ĕçлеççĕ, задание тăтăшах ирттерсе пурнăçлаççĕ. Шăмăршă районĕнчи «Гвардеец» колхозран 35 çын ĕçлет. Юханшывсем хĕррине турттарса кăларнă йывăçа пĕтĕмпех шыва пăрахса палăртнă вырăна вăхăтра илсе çитерессишĕн кĕрешÿ пырать.

Кăçал юханшывсенче шыв сахал. Çавăнпа вăрманпромхоз коллективĕ пĕренесене шыва пăрахас ĕçе тăват-пилĕк кун хушшинче вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешет.

Пирĕн ĕçри çитменлĕхсемпе йывăрлăхсем те сахал мар. Правительство йышăннă тăрăх, Шăмăршă тата Чкаловски районĕсен сулă юхтарма вăхăтлăха 600 çын уйăрса памалла. Халлĕхе вĕсенчен çурри çеç ĕçлет. Ĕç вăйĕ çитменни чылай ĕçе вăхăтра тума, тулли шывпа лайăх усă курма чăрмантарать. Районсенчи партипе совет организацийĕсем ĕç вăйĕ уйăрса парас тĕллĕшпе çак кунсенчех тивĕçлĕ пулăшу памасан, вăрманпромхоз умне пысăк йывăрлăх тухса тăма пултарать.

ОРС ĕçне тата рабочисемпе колхозниксем патне хаçат-журналсем илсе пырассине, культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатмалла.

Вăрманпромхозри парторганизаци рабочисен пуçарулăхĕпе пултарулăхне вăйлатса пыма, умра тăракан ответлă задачăна чыслă пурнăçлама коллектива мобилизацилет.

П. КАЙСАРОВ,
Шăмăршă вăрманпромхозĕн директорĕ.

Государствăна — выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

КУСЛАВККА. Аслă Сала, Тĕрлемес, Муркар, Чашлама, Варасăр ял Совечĕсене кĕрекен колхозсенчи колхозник хуçалăхĕсем государствăна тăватă уйăхшăн сĕт памалли обязательствăна срокчен пурнăçларĕç. Воробьевка ял Советĕнчи колхозниксем пилĕк уйăхшăн сĕт парса татса, июнь шучĕпе 3.700 литр панă.

«Динамо» колхоз аш-какай памалли тăхăр уйăхри плана тултарнă. Çавăн пекех колхоз сĕт хатĕрлесе парас енĕпе те ăнăçлă ĕçлет.

ВĂРНАР. Районти колхозсемпе колхозник хуçалăхĕсем сĕт хатĕрлесе памалли пĕрремĕш квартал планне 108,3 процент тултарнă.

КАЛИНИНО. Районти колхозсемпе колхозник хуçалăхĕсем государствăна срокчен аш-какай парса татассишĕн ăнăçлă кĕрешеççĕ. Вĕсем ку тĕллĕшпе пĕрремĕш квартал планне 102,2 процент тултарнă.

ШĂМĂРШĂ. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз аш-какай памалли 9 уйăхри плана 134 процент, сысна ашĕ хатĕрлесе памалли çулталăкри плана 374 процент тултарнă.

Сĕт хатĕрлесси те лайăх пулса пырать.

ОКТЯБРЬСКИ. «Звезда» колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана çулсеренех срокчен пурнăçласа пырать, ытти колхозсене пример кăтартать.

Колхозăн кăçал 1-мĕш кварталта 20 центнер аш-какай памалла пулнă, вăл 46 центнер панă.

Сталин ячĕпе, Винокуров ячĕпе тăракан, «Новая жизнь» тата «Культура» колхозсем те аш-какай памалли кварталти плана чылай ирттерсе тултарнă.

Хĕрлĕ ялав памалла тунă

Чăвашполиграфиздат тата полиграф производствипе пичет работникĕсен профсоюзĕн обкомĕ «Чăвашкниготорг» магазинĕсем социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Çĕмĕрлери магазин коллективĕ (магазин заведующийĕ Терентьев юлташ, профорг Иванова юлташ) мала тухнă. Магазин март уйăхĕнчи тавар çаврăнăш планне 156 процент тултарнă. Çак магазина Чăвашполиграфиздатпа полиграфи производствипе пичет работникĕсен профсоюз обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Март уйăхĕнче Элĕк, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи тата Шупашкар хулинчи 1, 2, 4-мĕш номерлĕ кĕнеке магазинĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Мала тухнă бригадăсем

Строительство организацийĕсенче ĕçлекен бригадăсем хушшинче пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн тата тухăçлă ĕçлессишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви бригадăсен 1952 çулхи IV-мĕш кварталти Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Министерство Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвакан трестри хăшпĕр бригадăсем лайăх ĕçленине палăртнă тата вĕсене хисеплĕ ят панă.

Арматурщиксен А. Д. Смирнов юлташ, платниксен И. Д. Андрюшкин юлташ, штукатурсен Н. А. Косарев юлташ, столярсен А. И. Фролов, Н. И. Толчин, И. А. Иванов, А. Д. Сарбаев юлташсем ертсе пыракан бригадăсене пысăк пахалăхлă тата тухăçлă ĕçлекен бригада ятне панă. Асăннă бригадăсем, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, куллен паха тĕслĕх кăтартаççĕ.

Артель членĕсен ăмăртăвĕ

ШĂХАСАН. «Стахановец» промысла артель пĕрремĕш кварталти плана мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, артель членĕсем иккĕмĕш кварталти плана майăн 1-мĕшĕ тĕлне 70 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Д. Антонов, М. Соколова, В. Алюков, М. Белов юлташсем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултараççĕ, паха продукци туса кăлараççĕ.

Г. ЛУЧ.

Шупашкарти кирпĕч завочĕн коллективĕ илнĕ СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВО

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕллĕшпе панă директивăсенче строительство материалĕсем тăвакан промышленноçри работниксем умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратнă. Пилĕкçуллăхра строительство материалĕсем туса кăларасси икĕ хут, вăл шутра кирпĕч туса кăларасси 2,3 хут ÿсмелле, строительство материалĕсен пахалăхне лайăхлатмалла, ассортиментне нумайлатмалла.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă пысăкран та пысăк строительство программи, тĕнчери чи пысăк гидроэлектростанцисем, каналсем, уйри тырпула шăвармалли системăсем туни, пурăнмалли çуртсем, культурăллă учрежденисем çулсерен нумай лартни совет çыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать.

Кирпĕч туса кăларассине ытларах ÿстересси, продукци пахалăхне лайăхлатасси, унăн хăйне ларакан хакне йÿнетесси—пирĕн чыслă тивĕç.

Шупашкарти кирпĕч завочĕн коллективĕ, пĕтĕм халăхăн социализмла ăмăртăвне хутшăнса, çакăн пек обязательство йышăнать:

1. Планран ирттерсе 2 миллион чĕрĕ кирпĕч, пурĕ 18 миллион чĕрĕ кирпĕч, вăл шутра 6,5 миллион шăтăклă кирпĕч туса кăлармалла.
2. Хулари стройкăсене пурĕ 17 миллион хĕртнĕ кирпĕч, вăл шутра планран ирттерсе 2,5 миллион кирпĕч памалла.
3. Май уявĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, кирпĕч тума срокчен тытăнма, майăн 1-мĕшĕ тĕлне 1,3 миллион чĕрĕ кирпĕч туса кăларма, 150 пин кирпĕч хĕртсе кăларма пулатпăр.
4. Пĕрремĕш сорт кирпĕч 82 процент туса кăлармалла.
5. Топливо 2 процент перекетлемелле.
6. Кирпĕчĕн хăйне ларакан хакне, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 12 процент йÿнетмелле.

Шупашкарти кирпĕч завочĕн коллективĕ, çак обязательствăна йышăнса, Ивановăри кирпĕч заводне социализмла ăмăртăва чĕнчĕ. Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине пăхăнса тăракан кирпĕч завочĕсенче ĕçлекен рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене кăçалхи сезонта пысăк пахалăхпа ĕçлессишĕн, кирпĕч тумалли плана ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеме чĕнсе каларĕ.

Обязательствăна заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пĕрлехи пухăвĕнче апрелĕн 9—11-мĕшĕсенче йышăннă.

Профсоюзсен Центральнăй Комитечĕсен пленумĕсем

Мускавра автомобильпе трактор промышленноçĕнчи рабочисен, машинăсем тата приборсем тăвакан промышленноçри рабочисен, ялхуçалăх машинисем тăвакан промышленноçри рабочисен, станоксемпе инструментсем тăвакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕсен Центральнăй Комитечĕсен пленумĕсем пулса иртнĕ. Пленумсем, министерствăсене çĕнĕлле йĕркеленĕ май, маларах асăннă профсоюзсене пĕрлештерсе, пĕр профсоюз туса хума ВЦСПС-ран ыйтнă.

ВЦСПС секретариачĕ çав ыйтăва пăхса тухса, профсоюзсене пĕрлештермелле тунă. Çапла вара машиностроенири рабочисен профсоюзне туса хунă.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче машиностроенири рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш пленумĕ пулнă. Профсоюзăн Центральнăй Комитечĕн президиумне 9 çынтан суйланă. Профсоюз Центральнăй Комитечĕн председателĕ пулма И. Т. Влинова, председатель заместителĕ пулма И. В. Белова, секретарĕ пулма В. Г. Царева суйланă.

* * *

Мускавра электростанцисенчи, электропромышленноçри тата çыхăну хатĕрĕсем тăвакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕсен Центральнăй Комитечĕсен пленумĕсем пулса иртнĕ. Министерствăсене çĕнĕлле йĕркеленĕ май, пленумсем ВЦСПС-ран маларах асăннă профсоюзсене пĕрлештерсе, пĕр профсоюз туса хума ыйтнă. ВЦСПС çав ыйтăва пăхса тухса ырланă. Пĕр профсоюз — электростанцисемпе электропромышленноçри рабочисен профсоюзне туса хунă. Электростанцисемпе электропромышленность министерствин торф предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем те çав профсоюзра пулаççĕ. Электростанцисемпе электропромышленноçри рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш пленумĕнче президиум тата ревизи комиссине суйланă. Çĕнĕ профсоюзăн Центральнăй Комитечĕн председателĕ — М. Я. Александров, председатель заместителĕсем И. Т. Белей тата В. Н. Варламов, секретарĕ—А. Ф. Агафонов. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху «КПСС Чăваш обкомĕн IV-мĕш пленумĕн йĕркипе çинчен» «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ Яковлев юлташ тунă доклада сÿтсе явнă.

Парти обкомĕн IV-мĕш пленумĕ, тет докладчик, республикăри «Коммунизм ялавĕ» тата «Советская Чувашия» хаçатсен мĕнле ĕçлени çинчен редакторсен доклачĕсене сÿтсе явнă. Пленум йышăннă пысăк решени, паллах, пирĕн хаçатсен ĕçне тĕпрен лайăхлатма пулăшать.

КПСС обкомĕн пленумĕ йышăннă постановленире пирĕн партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕн кăтартăвĕсене тĕп вырăна хунă. Партин Центральнăй Комитечĕ, — тет Яковлев юлташ,— парти комитечĕсене хăйсен хаçачĕсене пропаганда ĕçне лайăхлатмалли никĕс вырăнне хурса хаклама, вĕсем çине таянса массăсене политикăлла воспитани парас ĕçĕн мĕнпур участокĕсене тата пропагандăна ертсе пырассине лайăхлатма, хăйсен хаçачĕсем пулăшнипе партилле-политикăлла ĕçĕн опытне пĕтĕçтерме, çитменлĕхсене критиклессине сарса пыма хушать. Центральнăй Комитет парти комитечĕсене хаçат редакцийĕсенче парти хушнă пек çирĕп йĕркелĕх туса хума, хаçат работникĕсене воспитани парас тĕлĕшпе куллен ĕçлеме хушать.

Унтан Яковлев юлташ пленум постановленийĕ çинчен тата КПСС обкомĕн пленумĕ йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе партин хула комитечĕпе пуçламăш парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн калать.

Яковлев доклачĕ тăрăх чи малтан Давыдов юлташ (радиоинформаци комитечĕ) тухса каларĕ.

— Эпĕ, республикăри «Коммунизм ялавĕ» тата «Советская Чувашия» хаçатсене вулаканĕ,— терĕ вăл,— хаçатсем республика пурнăçне сутатас ĕçе лайăхлатнине палăртасшăн. Çапла май хаçатсен авторитечĕ те чылай ÿсрĕ. Çапах та, тет вăл малалла, хаçатсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те нумай. Пирĕн республикăри хаçатсем литературăпа искусство ыйтăвĕсемпе çителĕксĕр интересленеççĕ. Ку енĕпе пулса иыракан çĕнĕ ĕçсене хаçатсем час-часах сутатмасăр хăвараççĕ. Тĕслĕхрен, Я. Ухсайăн «Çул» ятлă романĕ пирĕн литературăри паллă событи пулчĕ. Ун çинчен хаçатсем нумай вăхăт хушши нимĕн те çырмарĕç. Хаçатсенче В. Ходяшевпа Т. Фандеев аслă Сталин çинчен çырнă кантатăсем çинчен хаçатсенче нимĕн те çырман-ха. «Советская Чувашия» хаçат чăваш писателĕсен вырăсла куçарнă произведенийĕсене çав тери çителĕксĕр пропагандăлать. Хаçатсенче илемлĕх енчен пулса çитеймен произведенисене пичетлесе кăларни те пулнă. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра Г. Хирбюн «Колхоз такмакĕсем» ятлă юрри пичетленнĕ, сăмахĕсене Н. Васянка çырнă. Ку юрă кĕвви лайăх, сăмахĕсем вара япăх.

Малалла Давыдов юлташ вырăсларан чăвашла куçарас ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма тата чăваш чĕлхине вĕренес ĕçе лайăхлатма кирли çинчен калать. Пирĕн республикăра нумай произведенисене чăвашла куçарса пичетлесе кăлараççĕ, анчах ку ĕçе тĕрĕслекенсем çукпа пĕрех. Çавна пула чăвашла куçарас ĕçĕн пахалăхĕ çителĕксĕр. Сăмахран, Чăваш академи театрĕ «Çемье чысĕ» ятлă пьеса лартать, ăна чăвашла япăх куçарнă. Çав вăхăтрах çак спектакль çинчен хаçатсенче рецензи пичетленсе тухман-ха. Чăваш чĕлхине лайăхрах вĕренме кирли çинчен каласа, Давыдов юлташ наука работникĕсем чăваш чĕлхин ыйтăвĕсем тăрăх хаçатсенче сахал çырнине палăртать. Çав вăхăтрах, тет вăл, наука работникĕсене пурне те хурлама юрамасть, ку çитменлĕх «Коммунизм ялавĕ» хаçатра литературăпа искусство работникĕсен пухăвĕ çинчен çырнă статьяра пулнă. Унта Ильбек калана çак сăмахсене илсе кăтартнă: чĕлхеçĕсем чăваш чĕлхине пуянлатас тесе мар, ăна пăсас тĕлĕшпе ытларах ĕçленĕ. Чĕлхеçĕсене çапла айăплани пачах тĕрĕс мар.

Юлашкинчен Давыдов юлташ республикăри хаçатсен районсемпе хуласенчи хаçатсене ытларах пулăшма кирли çинчен калать.

Ун хыççăн Долгов (чăвашсен государство издательстви) юлташ сăмах илчĕ. Вăл «Коммунизм ялавĕ» хаçат литературăпа искусство ыйтăвĕсене мĕнле сутатни çинчен тĕплĕн каларĕ.

— Çак пленум пухăнас умĕн,— тет вăл,— «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1952 çулта тата çак çулхи виçĕ уйăхра тухнă номерĕсене пăхса тухрăм, хаçат литературăпа искусство ыйтăвĕсене мĕнле сутатнине тишкертĕм. Çак вăхăтра çав ыйтусемпе 90 статьяпа рецензи пичетленнĕ. Вĕсем хушшинче лайăх статьясем пур. Вĕсен шутне Л. Агаковăн «Чăваш совет прозине малалла вăйлатассишĕн», А. Эсхелĕн «Чăваш драматургийĕ çинчен» ятлă статьисем кĕреççĕ. Çак статьясен авторĕсем чăваш писателĕсен творчествăлла ĕçне, уйрăм писательсен произведенийĕсенчи çитменлĕхсене тĕплĕн кăтартса панă.

Самрăк писательсене пулăшма хаçат чылай статьясем пичетлесе кăларнă. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисенче çитменлĕхсем пур. Сăмахран, С. Шавлы хăйĕн статьинче самрăк авторсене ятласа тăкма хăтланнă. М. Типчаковский консультацийĕ пачах çителĕксĕр.

Малалла Долгов юлташ М. Сеспĕл творчестви çинчен тухнă статьясенчи çитменлĕхсене палăртать. Çакна палăртмалла, тет вăл, пирĕн критика Сеспĕл творчествине пĕр енчен кăна сутатать, унăн вăйсăр енĕсене кăтартса памасть. И. Яковлев ĕçĕсене сутатса панă чухне те çав çитменлĕхех палăрать.

«Советская Чувашия» хаçатра литературăпа искусство работникĕсен пухăвĕ çинчен пичетленсе тухнă статьяна критиклесе, Долгов юлташ унта литературăпа искусствăри типичность ыйтăвне мĕнле сÿтсе явни çинчен сутатманнине палăртать.

Малалла Долгов юлташ чăваш писателĕ Ф. Уяр хăйĕн «Ылтăн кĕркунне», «Шурча таврашĕнче» произведенийĕсенче чăваш халăхĕн историне пăсса кăтартнине палăртать. Çак писатель ака мĕн калать: «чăваш сулĕ ĕлĕк яланах тĕттĕм çĕрелле, упа шăтăкнелле, сĕм вăрманалла илсе кайнă», «сукмак вĕçĕнче тарăн варсенче, тискер кайăксем хушшинче çеç вăл хăйне ирĕкрех туйнă».

Чăн та, тет Долгов юлташ, патша тарçисем, помещик-эксплуататорсем хĕсĕрлесе çитернипе пула, чăвашсем вăрмана кайни пулнă, анчах ку вăл историре тĕп вырăн йышăнмасть. Историре тĕп вырăн йышăнакан паллă вăл ирĕке тухассишĕн кĕрешни пулать. Патша Российĕнчи халăхсем аслă вырăс халăхĕ ертсе пынипе ун чухнехи пусмăра хирĕç кĕрешнĕ.

Шупашкарти 1-мĕш типографи директорĕ Андреев юлташ хаçат-журналсемпе кĕнекесене илемлĕн кăларасси çинчен каларĕ.

Совет çыннисем полиграфи работникĕсем умне пысăк ыйтусем кăларса тăраççĕ. Вĕсем илемлĕ, содержани енчен лайăх хаçат-журналсемпе кĕнекесем илесшĕн.

Вулакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе, типографири рабочисем тата инженерсемпе техниксем пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Клишесем тăвассине чылай лайăхлатнă, «Советская Чувашия» хаçата вулама çăмăл шрифтпа наборлаççĕ.

Андреев юлташ партин хула комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн типографисе лекторсем тăтăшах яма кирлине асăрхаттарать, КПСС обкомĕн пленумĕ йышăннă решение чыслăн пурнăçлас тĕллевпе ĕçе тĕрĕс йĕркелеме кирлине палăртса, хула комитечĕн промышленность пайĕнчен пулăшу ыйтать.

— «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсене,— тет Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи переселенчески пай начальникĕ Широв юлташ,— чăваш чĕлхине пăснăшăн, уйрăмах вырăсларан чăвашла япăх куçарнăшăн парти обкомĕн пленумĕнче тивĕçлипе критиклерĕç. Анчах çав критикăран редакцинче ĕçлекенсем тивĕçлĕ выводсем туман. Вырăсларан япăх куçарнă статьясем халĕ те пичетленеççĕ-ха.

Широв юлташ çакна тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать.

Педагогика институтĕнчи партком секретарĕ Гришин юлташ хаçатсем аслă шкулсемпе техникумсен пурнăçне çителĕксĕр сутатнине палăртать. Вăл хаçат редакцийĕсене, уйрăммăн илсен, «Советская Чувашия» хаçат редакцийĕн пропаганда пайĕн заведующийне Сарра юлташа пропагандистла статьясем çырма аслă шкулсенчи преподавательсене çителĕксĕр хутшăнтарнăшăн критиклерĕ.

Гусев юлташ (театр) хаçатсен театра ытларах пулăшма кирли çинчен калать. Хаçатсенче спектакльсем çинчен рецензисем пичетленеççĕ, анчах вĕсенчен нумайăшĕнче артистсем çинчен «ку лайăх вылять», «ку начар вылять» тенисĕр пуçне нимĕн те çук. Гусев юлташ хаçатсенче куракансен шухăш-кăмăлĕ çинчен çырма сĕнет.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри партком секретарĕн заместителĕ Трушин юлташ хаçатсем промышленность ĕçне çителĕксĕр сутатнине палăртать. Хаçатсем нацилле кадрсен ÿсĕмĕ çинчен сахал çыраççĕ.

КПСС хула комитечĕн секретарĕ Никитин юлташ хаçатсенче промышленность ĕçне тата хулари парти организацийĕсен партилле-политикăлла, партилле-организацилле ĕçне çителĕксĕр сутатнине палăртать.

Пренире çавăн пекех Чăвашгизăн главнăй редакторĕ Любимов юлташ, «Советская Чувашия» хаçат корреспонденчĕ Ржанов юлташ, «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ Карташов юлташ тухса каларĕç.

Актив пухăвĕ сÿтсе явнă ыйту тăрăх решени йышăнчĕ.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленсе ирттерер!

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ТĂРĂХ КĔРХИ ТЫРĂСЕН КАЛЧИНЕ УДОБРЕНИСЕМ ПАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

1.	Шăхасан	78,3
2.	Вăрнар	49,4
3.	Комсомольски	42,2
4.	Çурачăк	40,1
5.	Первомайски	34,0
6.	Красноармейски	26,4
7.	Канаш	26,0
8.	Калинино	22,8
9.	Тăвай	22,3
10.	Улатăр	22,1
11.	Йĕпреç	19,4
12.	Елчĕк	19,4
13.	Вăрмар	17,6
14.	Шăмăршă	16,2
15.	Сĕнтĕрвăрри	15,7
16.	Çĕрпÿ	12,1
17.	Куславкка	9,3
18.	Муркаш	9,2
19.	Сĕнтĕр	6,8
20.	Хĕрлĕ Чутай	6,6
21.	Элĕк	4,7
22.	Советски	4,7
23.	Ишлей	4,6
24.	Кувакино	4,3
25.	Шупашкар	3,8
26.	Чкаловски	2,2
27.	Октябрьски	—
28.	Пăрачкав	—
29.	Çĕмĕрле	—
30.	Етĕрне	—

Плана тултаратпăр

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Партизан» колхоз уй-хирти ĕçсене тума тĕплĕн хатĕрленчĕ. Бригадăсен çураки ирттермелли план пур. Колхозниксем агротехникăллă кашни ĕçе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн социализмла ăмăрту сарса ячĕç.

Суркуннехи ĕçсене эпир кĕрхи тырăсен калчисене тата нумай çул ÿсекен курăксене удобренисем сапса панипе пуçларăмăр. Калчасене апат пани тырăпа курăк тухăçлăхне ÿстерет. Çакна пирĕн колхозниксем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та ку ĕçе тума чĕнсенех колхозниксем уй-хире кар тухрĕç. Кĕрхи тырăсен калчисене 114 гектар çинче, нумай çул ÿсекен курăксене 47 гектар çинче минераллă удобренисем сапса апат патăмăр. Ĕç малалла пырать. Калчасемпе курăксене удобренисем памалли плана пĕтĕмĕшпех тултаратпăр.

В. КУЗЬМИН,
колхоз агрономĕ.

Ĕç вăйланса пырать

ВĂРНАР. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозра çурхи ĕçсене лайăх ирттерессишĕн социализмла ăмăрту сарăлса пырать. Çуркуннехи уй-хир ĕçĕсенче колхозниксем çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ.

Зеленовкăри 3-мĕш тата 4-мĕш бригадăсем ырашпа кĕрхи тулă калчисене минераллă удобренисем сапса парас ĕçе виçĕ кун хушшинче пурнăçларĕç. Ку бригадăсене колхоз председателĕн заместителĕ Социализмла Ĕç Геройĕ А. Ашанин ертсе пырать. Бригадăсем, калчасене удобрени панă вăхăтрах, 167 гектар çине курăк акмалли сеялкăпа клевер акнă тата кĕркунне сухаласа хăварнă çурхи тырă акмалли вырăнсене минераллă удобренисем сапса тухнă.

Ытти уй-хир бригадисем те çавăн пекех ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Уй-хир ĕçĕсене кунтан-кун вăйлатса пырса, Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз ыраш калчисене тата кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене сÿрелеме хатĕрленет.

Н. ЛЕОНИДОВ.

Çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле

Пирĕн машина-трактор станцийĕсенче хăвăтла машинăсем нумайланчĕç. Вĕсенче дизеллĕ тракторсем, «У-2» тата «ХТЗ-7» пропашной тракторсем, самоходнăй комбайнсем тата ытти машинăсем те нумай.

Çавăн пек çĕнĕ машинăсемпе кăçал уй-хирти ĕçсене ытларах механизацилеме, ака-сухана агротехника тĕлĕшĕнчен паха тата хăвăртрах туса ирттерме пултаратпăр.

Республикăри машина-трактор станцийĕсен кăçал, çемçе суха çине куçарса шутласан, 400 пин гектар сухаланă чухлĕ ĕç тумалла. Ку вăл пĕлтĕрхинчен чылай ытларах пулать. Машина-трактор станцийĕсен кăçал уй-хирти ĕçсене ытларах механизацилеме тивет. Тракторпа тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне те нумай йÿнетмелле. Машина-трактор станцийĕсен партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăна—тракторăн пĕр кунхи ĕçне пилĕкçуллăхра 50 процента яхăн ÿстерес задачăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелле.

Ăнăçлă ĕçлемелле пултăр тесен, пуринчен малтан, çакна асра тытмалла: тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тĕплĕн юсас пулать, ĕç вăхăтĕнче техникăна лайăх пăхса усрас пулать. Унсăрăн пĕр тракторист та ĕç нормине ăнăçлăн тултараймасть.

Республикăри МТС-сенчен чылайăшĕ çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Сăмахран, Йĕпреç, Элĕк МТС-ĕсем мĕнпур тракторсемпе ялхуçалăх машинисене срокчен юсаса пĕтерчĕç. Вĕсем трактор бригадисене тĕрĕс организацилесе çирĕплетнĕ, пур бригадăсенче те кашни тракторпа талăкра икĕ сменăпа ĕçлеме кирлĕ чухлĕ трактористсемпе прицепщиксем хатĕрленĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене колхозсене янă. Юсанă хыççăн кашни трактора тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене тĕплĕн тĕрĕслесе йышăннă. Тĕрĕсленĕ чухне палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтернĕ. Çавăн пекех Сĕнтĕр, Вăрнар, Çĕмĕрле, Комсомольски, Чкаловски МТС-ĕсем те юсав ĕçне ăнăçлă вĕçлерĕç. Трактористсем халĕ тракторсене техника тĕлĕшпе пăхмалли правилăсене вĕренеççĕ.

Çураки кунĕсем çитсе тăчĕç пулин те, МТС-сенче юсаман тракторсемпе ялхуçалăх машинисем чылай-ха. Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Сиява, Сурмайдан, Тăвай МТС-ĕсем тракторсене юсас ĕçре ытла та кая юлса пыраççĕ. Çак МТС руководителĕсем юсав пахалăхĕшĕн кирлĕ пек кĕрешмен. Юсанă тракторсемпе ялхуçалăх машинисенчен чылайăшĕ çуракине тухма юрăхлă мар. Поршень таврашĕнчи пайсене, баббитпа витнĕ подшипниксене, клапан механизмĕсене, воздухоочистительсене, радиаторсене тата ытти хăшпĕр узелсене лайăх юсаса çитермен.

Дизеллĕ тракторсене те кирлĕ пек юсаман. Топливнăй насуссене, форсункăсене тракторсем çине вырнаçтарса лартиччен кирлĕ пек тĕрĕслесе тухман, мĕнле ĕçленине стендсем çинче сăнаса пăхман, кивĕ фильтрсене çĕннисемпе улăштарса лартман. Дизеллĕ тракторсене, вĕсен пайĕсене лайăх тасатмасăрах пухнă пулнă.

Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕсем ним пирки те мар, тракторсене лайăх юсаман пирки кăна иртнĕ çуркунне кашни тракторпа талăк хушшинче пурĕ те 3—3,3 гектар сухаланă чухлĕ çеç ĕç тунă. Тракторсемпе çавăн пек начар усă курни текех пулмалла мар. Кирек хăш сменăра та, кирек хăш тракторпа та сменăри задание яланах тултарса пымалла.

МТС директорĕсен, главнăй инженерĕсемпе контролер-механиксен кашни трактора, кашни машинăна мĕнле юсанине тĕплĕн тĕрĕслемелле, вĕсене ĕçлеттерсе пăхмалла, палăрнă çитменлĕхсене пурне те çийĕнчех пĕтермелле. Машина-трактор паркне çуракин малтанхи кунĕсенчен пуçласа ака-суха пĕтиччен пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттерессишĕн кĕрешмелле. Трактор бригадисене тĕрĕс организацилени кирлĕ. Тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене бригада алăкне актпа çирĕплетсе памалла. Кашни бригадиран тата бригадир помощникĕпе аслă трактористăн задачи—хăйсене çирĕплетсе паракан машинăсене лайăх тĕрĕслесе илесси, кашни тракторпа тухăçлă ĕçлесси.

МТС руководителĕсен механизаторсен пĕлĕвне тĕрĕслемелле. Трактористсен пурин те тракторсене, уйрăмах дизеллĕ тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене техника тĕлĕшпе пăхмалли çĕнĕ правилăсене пурнăçласа пымалла.

Тракторсене çуракинче тухăçлă ĕçлеттерес тесен, куçса çÿрекен мастерскойсен ĕçне лайăх йĕркелес пулать. Сĕнтĕр, Элĕк, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр МТС-сем куçса çÿрекен мастерскойсем валли приборсем, инструментсем çителĕклĕ уйăрса параççĕ. Çав вăхăтрах Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай тата ытти чылай МТС-сенче куçса çÿрекен мастерскойсене халĕ те юсаман-ха. Ку енĕ трактор бригадисене техника енчен пулăшса тăрас ĕçе тивĕçлипе хакламаннине кăтартать.

Куçса çÿрекен мастерскойсене юсаса йĕркелемелле, техникăлла сăлтавсем пирки пĕр машина та ĕçлемесĕр тăмалла мар.

МТС директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен механизаторсем хушшинче социализмлă ăмăртăва йĕркелесе пымалла. МТС руководителĕсен çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Кашни трактор бригадине хирти ĕçсене лайăх тума пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрлени кирлĕ. Трактористсен сменăри нормăна кашни кун тултарса тата ирттерсе тултарса пымалла. Колхозсемпе тунă договорсенче палăртнă ĕçсене пурне те вăхăтра, лайăх туса памалла.

Машина-трактор паркĕ çуракинче ăнăçлă ĕçлессе «Автотракторосбыт» тата ялхуçалăх снабжени кантурĕсенчен нумай килет. Вĕсен МТС-сене кирлĕ яналасене вăхăтра тата çителĕклĕ кÿрсе килмелле. «Автотракторосбыт» кантурĕ çавранăçуллă ĕçлемен пирки чылай МТС-сем дизеллĕ двигательсене юсас тĕлĕшпе пысăк чăрмавсем тÿсеççĕ. Ялхуçалăх снабжени кантурĕ те МТС-сене кирлĕ ялхуçалăх машинисен пайĕсене çителĕклĕ парса тăмасть.

Совет правительстви снабжени тĕлĕшпе çирĕп нормăсем кăтартса панă. «Автотракторосбыт» тата ялхуçалăх снабжени кантурĕсем çав нормăсем тăрăх МТС-сене мĕн кирлине пурне те кÿрсе парассишĕн ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсен республикăри МТС-сене ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пыма пулăшмалла.

А. ПИКУЛЕВ,
Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин МТС-сен управленийĕн главнăй инженерĕ.

Сталин пулнă вырăнсенче

Сталин пек пурăнмалла, сталинла ĕçлемелле

Батуми. Революциллĕ кĕрешĕвĕн мухтавлă хули. Кунти вырăнсем пĕтĕмпех Сталин юлташ çинчен аса илтереççĕ. Аслă Сталин çамрăк чухнех кунта Батуми пролетариатне патша самодержавине тата капитализма хирĕç кĕрешме çĕкленĕ.

Авалхи Батуми хулине нумайăшĕ лайăх пĕлеççĕ. Кунта ĕлĕк Ротшильд, Нобель, Манташев, Сидеридис йышши капиталистсем алхасса пурăннă. Рабочисем хула тулашĕнче—Барцахаири, Холодная слободинчи, Чаобри шурлăхлă вырăнсенчи пĕчĕк те тăвăр хÿшĕсенче пурăннă.

Сталин юлташ Батумине килнине лайăх астăваççĕ. Унăн самодержавине питлекен, Батумири пролетариата пĕртен-пĕр тĕрĕс çул çине тăма чĕнсе каланă сăмахĕсене—социализм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешсе çĕнтерме чĕнсе каланă хĕрÿллĕ те ытти сăмахĕсене лайăх астăваççĕ.

Батумири ĕçсыннисем Сталин юлташăн пурнăçĕпе тата унăн революциллĕ ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан вырăнсене питĕ хисеплесе усраççĕ. Пирĕншĕн çав тери хаклă вырăнсене курас тесе, унта халĕ пирĕн аслă Совет çĕршывĕн мĕнпур кĕтесĕсенчен, пиншер километртан ĕçсыннисем пыраççĕ, халăх демократи çĕршывĕсенчи тата урăх çĕршывсенчи простой çынсем тăтăшах килеççĕ.

...Пушкин урамĕнчи музей çуртĕ. Çурт умĕнчи пĕчĕк садра речĕ-речĕпе кипарисем ешĕреççĕ. Çав çуртăн стени çинчи мраморан тунă асăнмалли хăма çине çапла çырса тунă:

Аслă Сталин

Çак çуртра ВКП(б)-ăн тата тĕнчери пролетариатăн çулпуçĕ 1901 çулхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче Тбилисирен килнĕренпе 1902 çулхи апрель уйăхĕччен пурăннă.

Йывăç пусма тăрăх террасăна юнашар пÿлĕме кĕретĕн. Кунта ун чухне Иосиф Виссарионович ĕçлесе пурăннă чухнехи пекех. Йывăç кушетка, пысăках мар сĕтел, икĕ пукан. Сĕтел çинче тăмран тунă чăм, чернильница, стакан. Сталин юлташăн рабочисен хваттерĕсенче кружоксен занятийĕсене ирттермелле пулнă, вĕрессе тăракан революцилле ĕçе ертсе пымалла, прокламацисем çырса пичетлемелле, Батумири рабочисен забастовкисемпе революциллĕ выступленийĕсене хатĕрлемелле пулнă. Унăн çав ĕçсене тума, полици йĕрленинчен пытанса, рабочисен хваттерĕсене çÿреме тивнĕ.

Джорджиашвили урамĕнчи 3-мĕш номерлĕ çурт çинче те мрамор хăма пур. Çав çуртра Сталин юлташ 1904 çулта пĕрремĕш хут ссылкăран тарса килсен пурăннă тата ĕçленĕ.

...Кăвак мрамортан тунă обелиск-памятник. Ун тавра чечексем ешĕреççĕ. Çак обелиска Батумири ĕçсыннисем Сильвестр Ломджарий рабочин кивĕ çурчĕ вырăнне, историллĕ çĕнĕ çул уменхи каçа асăнса лартнă. Çав каçхине ĕнтĕ Батумире социал-демократилле организаци йĕркелесе пуçланса кайнă.

Çав кунхине çĕрле, патша самани тĕксĕм çулĕсенче, Сталин юлташ пирĕн Тăван çĕршывра халĕ янкăшакан хĕвелĕн суттине курнă:

«Акă тул çутăлма тытăнать. Часах хĕвел тухĕ. Вăхăт çитĕ, çак хĕвел пирĕншĕн çутатма пуçлĕ!»

Çак тупă çĕнтерĕвĕн сăмахсене никçан та манас çук. Ку сăмахсем рабочи класа тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешме хăй панă. Сталин юлташ çак кунхине каланă асран кайми сăмахсем пирĕн çĕршывăра пĕтĕмпех пурнăçланчĕç.

Çав историллĕ тĕлпулура пулнă хăшпĕр çынсем паян кун та пурăнаççĕ-ха.

— Вăл çулхине,—аса илет Котэ Каландаров,—эпир хамăрăн пурнăç тĕрĕслĕхне пĕрремĕш хут пĕлтĕмĕр. Вăл тĕрĕслĕхе пире Сталин юлташ пачĕ. Сталин юлташа эпир, рабочисем, ун чухне пирĕн Сосо тесе чĕнеттĕмĕр.

Батумири революци музейĕнче Батуми пролетариачĕн революциллĕ мухтавлă ĕçĕсем çинчен калакан яналасем сахал мар упранаççĕ. Унта карăнтăкпа витнĕ, пăртак шупкаланнă хĕрлĕ пир пур. Ун çине çырнисем кăштах шуралма пуçланă. «Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!» тесе çырнă вăл пир çине. Çакă вăл—1903 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче РСДРП-ăн ленинла-«искралла» пайĕн Батумири комитечĕ демонстраци ирттернĕ чухне вĕлкĕшнĕ ялав. Ялава Грузири простой хĕрарăм Маглана Мгеладзе тĕрлесе тунă. Вăлах çак хĕрлĕ ялава полицирен сыхласа усранă.

Йывăр хурлăхпа, куççуль юхтарнипе тĕксĕмленнĕ çак хĕрарăм, Батумири пролетариатăн революциллĕ кĕрешĕвне курнă çын, пирĕн умра ларать.

— Пирĕн Сталин пирĕнтен уйрăлса кайнине ĕненме те йывăр,—тет Маглана.—Эпир пурте вăл çĕршер-пиншер çул пурăнĕ тесе шутланăччĕ. Акă вăл паян кун та, эпир ăна пĕр аллă çул каялла пĕлнĕ пекех, тăвăллă çил пекех лăпланма пĕлмен, паттăр çын, нимĕнрен шикленмесĕр малалла пăхса тăрать. Пире пурне те вăл çавăн пек паттăр та ним хăрами пулма вĕрентнĕ. Кам хăраса тăрать, кам та кам хăйĕн вăйĕ çине шанмасть, тесе вĕрентетчĕ вăл, пирĕнпе пĕрле ан та пытăр.

Юратнă тăван Сталин çук ĕнтĕ. Анчах та эпĕ çакна лайăх ĕненсе тăратăп: ун чухне вăл йăтса пынă ялав никçан та ÿкмĕ, мĕншĕн тесен унăн вĕренекенĕсем пурăнаççĕ. Вĕсем унăн ĕçне малалла туса пырĕç, Сталин хушнă пек ĕçлĕç.

Батумири пĕрремĕш демонстрацие хутшăннă ватă революционер Барнаб Долидзе Сталинăн пысăк паттăрлăхĕне хăюлăхне аса илет, Сталин çырнă прокламацисем рабочисене тĕрĕслĕхе лайăх ăнлanса илме пулăшни çинчен каласа парать.

— Пирĕн учителĕмĕр, пирĕн тусăмăр, пирĕн тăван та нихçан манми Сталин пирĕнтен уйрăлчĕ,—тет шăппăн Барнаб Долидзе.—Анчах та вăл пирĕн чĕремĕрсенче пурăнать.

Батумири ĕççыннисем Сталин юлташа асăнса ирттерекен хурлăхлă митингсенче çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Вĕсем Тăван çĕршыва малалла чечеклентерсе пырас ĕçре, коммунизм ĕçĕнче вăя шеллемесĕр тăрăшма пулчĕç.

Батумири нефтяниксем хăйсен пархатарлă ĕçне çулпуçĕн хисеплĕ ятне илме право илчĕç. Батумири нефть продукчĕсем тăвакан Сталин ячĕпе тăракан завод, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнĕ май, иртнĕ çулта ултă миллион тенке яхăн перекетлерĕ, виçĕ миллион тенке яхăн, планран ирттерсе тупăш пачĕ.

Батумири машинăсем тăвакан заводсенче ĕçлекенсен хастарлăхĕ ÿснĕçемĕн ÿсет. Батумири Берия ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан заводри стахановецсем—Грузи ССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Ш. Водачкария токарь, Батуми хула Совечĕн депутачĕ М. Дондуа сборщик, М. Рузяк токарь тата ыттисем те тата лайăхрах ĕçлеççĕ, лайăх продукци туса кăлараççĕ.

Батумири фанера тăвакан завод. Çав вырăнта ĕлĕк Ротшильд капиталистăн завочĕ пулнă. Паян кунти ватă рабочисем çамрăксене заводăн мухтавлă традицийĕсем çинчен аса илтереççĕ. Аслă Сталин вĕрентнĕ пек пурăнас тата вăл вĕрентнĕ пек ĕçлес чыспа телейрен пысăкки нимĕн те çук,—акă мĕн çинчен каласа параççĕ паян ватă рабочисем çамрăксене.

Индустриллĕ Батумири ытти предприятисен коллективĕсем те тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем сталинла пиллĕкмĕш пилĕкçуллăха, пирĕн Тăван çĕршывăн хăватне малалла çирĕплетсе тата чечеклентерсе пымалли пилĕк çуллăх плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Татьяна ЛИСКОВСКАЯ.

Батуми хули.

Вăйлă тырпулшăн

КОМСОМОЛЬСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Гигант» ялхуçалăх артелĕн членĕсем, партин XIX-мĕш съезчĕ колхозсем умне лартнă ответлă задачăна пурнăçласа, вăйлă тырпулшăн тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илессишĕн хастарлă кĕрешеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ çуракиче тухма пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн пыракан социализмла ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ.

Уй-хире удобрени нумайрах кăларатăн—тырă та ытларах туса илетĕн, теççĕ колхозри ĕçченсем. Вĕсем хăйсен сăмахне ĕçре çитĕнÿсем тунипе тÿрре кăлараççĕ. Коммунист Г. Белкин юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади хĕллехи агротехникăллă ĕçсене туса пĕтерчĕ, çуракине тухма хатĕр.

Е. Голландцев, Л. Вишнев, А. Голубев, С. Львов юлташсем ертсе пыракан уй-хир бригадисем те çуракине хатĕрленсе çитес ĕçсене ăнăçлă туса пыраççĕ. Колхоз фермăсенчи тата колхозниксен килĕсенчи тислĕкпе пурĕ 10.000 лав ытла уй-хире кăларса пысăк штабельсене хунă, çĕрпе витсе пусăрăнтарнă, 400 центнер минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ.

Колхоз территоринче хăйăрлă тата йÿçĕклĕ тăпрасем те пур. Çав участоксенче тырпул начар пулать. Çакна шута илсе, кăçал хăйăрлă вырăнсене ытларах тислĕк хушса лайăхлатма палăртнă. Уйрăмах пысăк йÿçĕклĕ тăпрасене лайăхлатма вырăнти тата минераллă удобренисем çителĕклĕ хатĕрлеççĕ.

Тимĕрçĕсем Л. Дубковпа Г. Кольцов юлташсем кашни плуга, сеялкăна, сÿрене тата культиватора тĕплĕн юсарĕç. МТС машинисемсĕр пуçне çураки тума 15 сеялка, 40 плуг хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне тимĕрçĕсем çуракинче уй-хире илсе тухма куçса çÿрекен пĕчĕк мастерской хатĕрлеççĕ. Çакна тума йывăр мар, материал та нумай кирлĕ мар: пĕчĕкрех вĕркĕç, кăмрăк чĕртмелли çĕр тултарнă ещĕк (ещĕке урапа çине вырнаçтараççĕ), сунтал, мăлатуксемпе уçăсем тĕрлĕрен сортлă тимĕр, хатĕр болттисемпе гайкăсем анчах кирлĕ. Сеялкăн е плугăн пĕр-пĕр пайĕ ванас пулсан, куçса çÿрекен мастерской уй-хиртех юсаса парать.

Кăçал колхоз лайăх сортлă паха вăрлăхсем çеç акать. Правлени тăрашнипе çураки тума çителĕклĕ таран вăрлăх фончĕ кĕркуннех хывса хăварнă. Вăрлăхсене ик-виçĕ хутчен машинăсемпе сортласа тасатнă. Вутпуççинчен тасатма тата яровизацилеме кирлĕ пулакан имçамсем хатĕр.

Колхозри конюхсем хăйсем пăхакан лашасене çураки тĕлне самăртса çитерессишĕн хытă тăрăшаççĕ. П. Ченакин, Н. Павлов, М. Орлов, И. Воробьев, К. Титова, Ж. Голландцева, Н. Портнова конюхсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Лашасем валли сĕлĕ, посыпка, утă тата ытти апатсем çителĕклĕ. Кашни бригадăна, лашасен шутне кура, сĕнĕрен сÿменсем, хăмăтсем, ĕнерчĕксем, тилхепесем илсе панă.

Вăйлă тырпул çитĕнтерес ĕçре механизаторсем тĕп вырăн йышăннине колхозра лайăх ăнланаççĕ. Артель кашни çулах трактористсем, комбайнерсем, шоферсем, прицепщиксем вĕрентсе хатĕрлет. Колхозра—20 механизатор, вăл шутран трактористсем, комбайнерсем, прицепщиксем, трактор бригадин бригадирĕсем вунпилĕк çын. Вĕсем пурте колхозра ĕçлеççĕ, вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. МТС çумĕнчи трактористсен курсĕнче тата виçĕ çын вĕренет. Сеяльщиксем, плугарьсем тата сÿреçĕсем пулса ĕçлеме чи опытлă, агротехникăна лайăх пĕлекен колхозниксемпе колхозницăсене çирĕплетнĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Львов юлташ), уй-хир бригадирĕсенчен тăтăшах отчетсем итлесе, çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе правление пысăк пулăшу парать.

Çулпуçăмăр И. В. Сталин юлташа пытарнă кун колхозра хурлăхлă митинг пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем каялла таврăнма çук çухатăва çирĕппĕн чăтса ирттерсе, малашне те Коммунистсен партипе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăма, политикăллă сыхăлăха ÿстерме, Тăван çĕршыва тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем нумайрах парса тăма тупа турĕç, çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерме сăмах пачĕç.

П. КОЛЬЦОВ.

Вăрманпромхоз ĕçне лайăхлатмалла

Приволжски вăрманпромхозăн Когоркри участокĕнчи рабочисен поселокĕнче машинăсем пухăнса тăнă. Вĕсем çитсе чарăннăранпа чылай вăхăт иртнĕ пулмалла. Сулă уçăласса кĕтсе ывăннă шоферсем хытă пăшăрханни сисĕнет:

— Мĕнле йĕрке ку! Тата миçе сехет кĕтсе тăмалла-ха?

— Ĕç пирки тăрăшакан çук кунта. Кашни кунах ахаль тăрса вăхăт нумай ирттеретпĕр.

— Руководительсем тăрăшманнипе кăçал та вăрмана йывăç нумай выртса юлма пултарать.

Руководительсем ĕçе пĕлсе организацилеменнипе хăватлă машинăсем час-часах ахаль тăраççĕ. Пĕр кун çеç мар, кун пекки час-часах пулкалать. Вăрманта машинăсене пĕр-пĕринчен иртсе çўреме сул юпписем туса паман. Çавăн пирки йывăç тиеме кĕрсе кайнă автомашинăсем çаврăнса тухиччен ыттисен вырăнтах кĕтсе тăма тивет.

Çакна пула йывăç тиемелли механизмсем (кранисем) сехечĕ-сехечĕпе ахаль тăраççĕ. Ĕçе кун пек япăх организацилени йывăç тиекен рабочисене те хытă тарăхтарать.

— Темĕнле тăрăшсан та плана тултараймастпăр, мĕншĕн тесен ĕçлеме условисем туса памаççĕ,—тет Мястюков рабочи.

— Пирĕн руководительсемшĕн пулсан, ĕçлени те, ĕçлемесĕр ларни те пурпĕрех. Эпир ĕçленине килсе те курмаççĕ, — тет Абабин юлташ.

Рабочисем вăрманпромхоз руководителĕсене массăсенчен уйрăлса кайнăшăн критиклеççĕ.

Нумаях пулмасть малта пынă вăрманпромхозсенчен пĕри—Приволжски вăрманпромхоз юлашки вăхăтра начар ĕçлеме тытăнни унăн руководителĕсем (директорĕ Григорьев юлташ) механизмсене тивĕçлипе хакламаннипчен килет. Кунта куçса çўрекен виçĕ электростанци пур. Вĕсенчен пĕри автомашинăсем юсакан мастерскойра ĕçлет, тепри—рабочисен поселокне çутатать.

Рабочисенчен чылайăшĕ ĕç нормине лайăх пĕлмеççĕ. Вăрманпромхозри рабочком (председателĕ Туманин юлташ) рабочисен ĕç условийĕсемпе, вĕсен ыйтăвĕсене дирекци мĕнле тивĕçтерсе пынипе кулен интересленмест. Пуçламăш парторганизаци (секретарĕ Иванов юлташ) агитациллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Рабочисем валли политика тата экономика ыйтăвĕсем тăрăх докладсемпе лекцисем сахал ирттереççĕ.

Ĕçе çакăн пек çителĕксĕр организациленĕ пирки вăрманпромхоз 1952 çулхи производство планне 82 процент çеç тултарчĕ, халăх хуçалăхне 1 миллион та 286 пин тенкĕлĕх ытла продукци парса çитереймен. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăрманта 16 пин кубометр пĕрене, 26 пин кубометр вутă юлнă. 1952 çулта вăрманпромхоз 1 миллион та 815 пин тенкĕ убыток тўснĕ.

Вăрманпромхоз руководителĕсем иртнĕ çул вăрман сахал уйăрса панăшăн пăшăрханатчĕç. Халĕ кун пек калама сăлтав çук. Лайăх вăрман çителĕклĕ уйăрса панă. Апла пулин те унăн ĕçĕнче улшăнусем сахал. Йывăç каснă çĕрте электропăчкăсемпе усă курмаççĕ. Ĕçе тивĕçлипе организацилемен пирки автомашинăсем час-часах ĕçсĕр тăраççĕ.

Вăрманпромхозăн лашасем те чылай. Лавсемпе йывăç турттармалли плана пĕр уйăхра та тултарни çук. Йывăç турттарас вырăнне лавсемпе час-часах ытти тĕрлĕ ĕçсенче усă кураççĕ.

Вăрманпромхоз начар ĕçленин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—ертсе пыракан работниксем хушшинче дисциплина çукки. Хăшпĕр вăрман участокĕсен начальникĕсемпе технорукĕсем тата мастерсем дисциплинăна пăсаççĕ. Когокрки вăрман пунктĕнчи технорук Афанасьев колхозсенчен ĕçлеме килнĕ лавсене хăй валли пĕрене турттартарнă. Вăл вăрманта ĕç мĕнле пынипе сахал интересленнĕ, механизмсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăман. Ку çеç те мар. Вăл вăрман участок начальникĕн Давыденкăн ситменлĕхĕсене хирĕç кĕрешмен, унпа пĕрле час-часах ĕçнĕ. Давыденкăпа Афанасьев рабочисене ĕçлеме лайăх условисем туса пама тăрăшман, массăсенчен уйрăлса кайнă. Вăрманпромхоз директорĕ Григорьев юлташ вĕсем пирки юлашки вăхăтченех нимĕнле мера та йышăнман. КПСС хула комитечĕ кăтартса панă хыççăн çеç дирекци Давыденкăна вырăнтан кăларнă.

Вăрманпромхоз кăçалхи пĕрремĕш кварталта та япăх ĕçленĕ: планна палăртнинчен 7 пин кубометр йывăç сахалтарах касса хатĕрленĕ, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 40 процента яхăн çеç тултарнă.

Халĕ вăрманпромхоз коллективĕ умĕнче пысăк та ответлă задача тăрать—сулă туса чылай йывăç ăсатмалла. Вăрманпромхоз çак ĕçе пурнăçлама тимлĕн хатĕрленсе çитмен: 23 пин кубометр вырăнне 19 пин кубометр йывăç çеç Атăл хĕррине турттарса кăларнă. Сулă юхтарма кирлĕ хăшпĕр хатĕрсем—катер, кимĕсем тата ыттисем те юсавлă мар.

Вăрманпромхоз руководителĕсем иртнĕ çулхи ситменлĕхсемпе йăнăшсенчен тивĕçлĕ вывод туман, предприяти юлса пынипе килĕшсе пурăнаççĕ, государство планĕсене чыслăн тултарса пырассишĕн ответлăх туймаççĕ.

Партин пуçламăш организацийĕ ситменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма, самокритикăпа аялтан килекен критикăна сарма тăрăшмасть, коммунистсен ĕçри ответлăхне ўстерсе пымасть. Вăл руководительсем рабочисен ыйтăвĕсене тивĕçтерессине хакламаннипе килĕшсе пурăннă, партипе государство дисциплинине çирĕплетессишĕн çителĕксĕр кĕрешнĕ.

Вăрманпромхоз Сосновка поселокĕнче, Шупашкартан 6—7 километртра вырнаçнă. Вăрманпромхоз директорĕ Григорьев юлташ, унăн заместителĕсем Борисовна Иванов тата ертсе пыракан ытти работниксем Шупашкарта пурăнаççĕ. Вĕсем ирĕн-каçăн киле çўреççĕ. Рабочисен пурнăçĕпе тĕплĕ интересленме вĕсен вахăт та «юлмасть».

КПСС Шупашкар хула комитечĕн бюровĕ Приволжски вăрманпромхоз ĕçĕ çинчен сўтсе явса, унăн ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ решени йышăннă.

Парти пуçламăш организацийĕн хула комитечĕн бюровĕ йышăннă решенирен тивĕçлĕ вывод тумалла. Парторганизаци администраци ĕçне тимлĕнрех тĕрĕслесе тăмалла, коллективăн пуçарулăхĕпе пултарулăхне кулен вăйлатса пымалла. Кашни рабочи Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнтăр, ĕç нормине кулен тултарса пытăр. Сулă юхтаракансем хушшинче массăллă-агитациллĕ ĕçе вăйлатмалла, сулăсене палăртнă вырăна вăхăтра илсе çитерессишĕн рабочисем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сармалла.

И. БУГАЕВ,
Т. МАЙОРОВ.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлатпăр

Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕ вăхăтĕнче пирĕн Çатракасси ял Советĕнчи суйлавçăсем хамăрăн задачăсене эпир мĕнле пурнăçласа пынине тĕплĕн тишкерсе тухрĕç. Кунпа пĕрлех вĕсем ял Совечĕпе унăн депутачĕсем коммунистсен партийĕн политикине пурнăçлас ĕçе мĕнле организацилесе пынине палăртрĕç.

Ял Совечĕ, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес енĕпе чылай ĕçсем турĕ. Ял Советĕнчи тăватă пĕчĕк артель икĕ пысăк колхоза пĕрлешрĕç. Вĕсем иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕç, тухăçлă тырпул пухса кĕртсе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те чылай ўсĕмсем турĕç. Пĕрлешсе пысăкланнă «Сталинец» колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарнă. Ял Советĕн депутачĕ Н. Смирнов юлташ заведующи пулса ĕçлекен ĕне ферминче иртнĕ çулта кашни ĕнерен, 1951 çулхипе танлаштарсан, 300-шер литр ытларах сĕт суса илнĕ. Ферма государствăна сĕт çу памалли плана срокчен тултарнă. Н. Смирнов юлташа иртнĕ суйлавра каллех ял Совет депутатне суйларĕç.

Сысна ферминче те лайăх ĕçлеççĕ. Кашни сысна аминчен вăтам шутпа 18-шар çура илсе пăхса ўстернĕ. Уйрăм работниксем пысăкрах ўсĕмсем тунă. Юнусова колхозница хăйне çирĕплетсе панă кашни амаран 21-шер, Никитина юлташ—20-шер çура илсе пăхса ўстернĕ. Сысна ферми планна пăхнинчен 70 пин тенкĕ ытларах тупăш илнĕ. Никитина юлташа суйлавçăсем пысăк хисеп турĕç, ăна ял Совет депутачĕ пулма суйласа хăварчĕç.

Ял Совечĕ государство умĕнчи пур тĕрлĕ заданисене те вăхăтра пурнăçласа пынă. Иртнĕ çулхи бюджета 106 процент тултарнă. Çавна май наказсенче палăртнă культурăпа благоустройство ĕçĕсене йăлтах пурнăçланă.

Суйлавçăсем иртнĕ суйлав вăхăтĕнче ял Совечĕпе унăн депутачĕсене наказсемпе паха сĕнўсем нумай пачĕç. Вĕсем пуринчен ытларах тырпул тухăçлăхне ўстерес, выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăпартса пырас ĕçсем çине тимлĕ пăхма, ку тĕлĕшпе вырăнти резервсемпе туллин усă курма кирлине кăтартса пачĕç. Çавăн пекех, культурăпа хуçалăх строительствин паянхи задачăсене çулленшне çĕклеме, халăх ырлăхĕшĕн кулен тăрăшма, государство умĕнчи заданисене яланах вăхăтра пурнăçласа пыма хушса хăварчĕç.

Суйлавçăсен наказĕсем—вырăнти Советсен практикăлла ĕçĕн программи. Наказсене пурнăçлассишĕн, суйлавçăсен шухăш-кăмăлĕсене тĕрĕс тивĕçтерессишĕн кулен ĕçлемелле. Анчах çак ĕçе эпир мĕнле туса пыратпăр-ха?

Суйлав хыççăн эпир ял Совечĕн организациллĕ-массăллă ĕçне ытларах вăйлатма, депутатсемпе, ялти активпа тачăрах çыхăнса ĕçлеме тăрăшатпăр. Чи малтанах, эпир суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене шута илсе, вĕсене пĕтĕçтертĕмĕр. Ун хыççăн, наказсене пурнăçлама практикăлла ĕçсем палăртас шутпа, ку ыйтăва ятарласа ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче активпа пĕрле пăхса тухрăмăр. Унта практикăлла сĕнўсем нумай пачĕç. Наказсемпе сĕнўсем тăрăх ял Совечĕн малашнехи ĕçĕсен планне туса хатĕрлерĕмĕр, наказсенче кăтартнă ĕçсене хăш вăхăтра пурнăçламаллине, мĕнле ĕçшĕн кам ответлă пулмаллине палăртрăмăр. Халĕ ĕнтĕ хăшпĕр наказсене пурнăçлани çинчен те каласа пама пулать.

Ял Советĕнчи ĕççыннисем Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парассишĕн кăçал та, пĕлтĕрхи пекех, пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. «Сталинец» артель членĕсем вăрман касса хатĕрлемелли плана 103 процент, çул хĕррине илсе тухмалли плана 118 процент тултарчĕç. Колхоз районти Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак ўсĕме эпир вăрман хатĕрлес ĕçе тĕрĕс йĕркеленине пула тупрăмăр. Ял Совечĕпе колхоз правленийĕ, пĕрле сўтсе явса, вăрман касса хатĕрлеме тата турттарнă çĕрте ĕçлеме ятарласа бригадăсем йĕркелерĕмĕр. Ку ĕçре пире пуçламăш парторганизаци те пулăшрĕ. Вăрман касса, турттаракан бригадăсенче ĕçлеме, колхозниксен ĕçне йĕркелесе пыма, коммунистсемпе тата активистсемпе пĕрлех, ял Совечĕн депутачĕсене П. Сергеевпа Г. Никитин юлташсене вăрмана ятăмăр.

Ял Совет депутачĕ Г. Михайлов юлташ ертсе пыракан Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та вăрман хатĕрлевĕнче ăнăçлă ĕçлерĕ.

Тухăçлă тырпулшăн, йышлă та тупăшлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес тĕлĕшпе панă наказсене пурнăçласси ял Совечĕн ĕçĕнче яланах тĕп вырăнта тăрать. Ку тĕлĕшпе организациллĕ тата практикăлла ĕçсем чылай туса ирттертĕмĕр. Кашни колхозрах, уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем чĕнсе каланине сўтсе яврăмăр.

Пирĕн колхозниксем кăçал пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă, 900 пăтран кая мар çĕрулми туса илме, ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт та лайăх пахалăхпа туса пыма пулчĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те артель членĕсем пĕлтĕрхинчен чылай тухăçлăрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Н. Смирновпа В. Максимов депутатсем ертсе пыракан фермăсенче ĕçлекенсем кашни ĕнерен пĕрер пăру илсе пăхса ўстерме, 1.100-шер литр сĕт сусă илме пулчĕç. «Сталинец» колхозри сысна ферминче ĕçлекенсем кашни амаран 20-шер çура илсе пăхса ўстерме обязательство илчĕç. Ял Совет депутачĕ А. Никитина тата унăн юлташĕ З. Юнусова кашни амаран 22-шер çура илсе пăхса ўстерме сăмах пачĕç.

Халĕ колхозниксем хăйсен обязательствисене пурнăçлассишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Н. Сергеевпа Г. Михайлов депутатсем ертсе пыракан «Çталинец» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çураки валли вăрлăх кирлĕ чухлĕ хатĕрлерĕç. Хире тислĕк кăларас тата ытти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те кулен ĕçлерĕç.

Колхозсем МТС-па договорсем турĕç.

Суйлавçăсем Ятман ялĕнчи пуçламăш шкул çуртне тĕпренех юсама, кăçал пуханакан самообложени укçипе шкул юсанă çĕрте усă курма хушса хăварчĕç. Çак наказа пурнăçлас тĕлĕшпе 20 кубометр строительство материалĕсем илсе, вĕсене шкул патне турттарма тытăнтăмăр. Шкул çуртне юсассишĕн В. Григорьев депутат ответлă пулса ĕçлет. Çавăн пекех, суйлавçăсен кăмăлне пурнăçлас тесе, фельдшерпа акушер пункчĕн çуртне туса йывăç хатĕрлеме палăртрăмăр.

Н. БАРМИНОВ,
Муркаш районĕнчи Çатракасси ял Совечĕн председателĕ.

Ĕнер, 1953 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче, вырăссен талантлă поэчĕ Демьян Бедный (Е. А. Придворов) çуралнăранпа 70 çул çитрĕ. Вăл 1883 çулта çуралнă. 1945 çулта вилнĕ.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Демьян Бедный. (ТАСС фотохроники).

Демьян Бедный çуралнăранпа 70 çул çитнĕ май

ЛЕНИНГРАД. Апрелĕн 11-мĕшĕнче Н. Е. Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан публичнăй библиотекăра, совет саманинчи чаплă поэт Демьян Бедный çуралнăранпа 70 çул тултарнине палăртса, поэт кĕнекисенчен пысăк выставка йĕркеленĕ.

Выставкăра Демьян Бедный произведенийĕсене — унăн баснисемпе раешникĕсене (юптарса çырнисем), памфлечĕсемпе юррисене тата сатирăлла сăввисене анлăн кăтартнă. Выставкăна курма пыракансем поэтăн «Эпир кама çапса аркатнă» ятлă кĕнекине уйрăммăнах юратса пăхаççĕ (кĕнеке ўкерчĕкĕсене Кукрыниксы художниксем тунă). Выставкăра поэтăн хăй вилес умĕнхи çулсенче çырнă «Эп хамăн халăха шанатăп», «Никам çĕнтереймĕ çирĕп шанчăк», «Çĕнтерў уявĕ» ятлă произведенийĕсем пысăк вырăн йышанаççĕ.

ОДЕССА. Апрелĕн 13-мĕшĕнче вырăс халăхĕн талантлă поэчĕ—юптаруçă Демьян Бедный çуралнăранпа 70 çул тултарнине палăртас майпа кунта Горький ячĕпе тăракан научнăй библиотека поэт произведенийĕсене кăтартакан выставка уçнă. Выставкăра 1919 çулта Харьков хулинче пичетленсе тухнă «Çĕр çинчен, ирĕк çинчен, рабочисен шăпи çинчен» повеçе, «Паллакан сăн-питсем», «Демьян Бедный çырнă çĕр юптару» сборниксене тата поэтăн суйласа илнĕ произведенийĕсен кĕнекисене кăтартнă. Выставкăра çавăн пекех чаплă поэт пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан литература та пур.

Райсовет сессийĕ çуракине лайăх ирттересси çинчен

ШАМĂРШĂ. Район Совечĕн сессийĕ районти колхозсем кăçалхи çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен сўтсе яврĕ. Сесси районти чылай колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Вăрлăхсене сортласа тасатас ĕç вăраххăн пулса пырать. Ахаль вăрлăхсене сортлă вăрлăхсемпе улăштармалли план та пурнăçланса пымасть. Акма кирлĕ сортлă вăрлăхран 67 процентне çеç хатĕрленĕ. Колхозсен уй-хире 58 пин тонна тислĕк кăлармалла пулсан, апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне 6 пин тонна яхăн çеç кăларнă.

Районти ялхуçалăх пайĕпе МТС-ри специалистсем колхозсене 1953 çул валли производство планĕ тата тупăшсемпе расходсен смети тума сахал пулăшаççĕ.

Доклад тăрăх 10 депутат тухса каларĕ. Райсовет депутачĕ Н. Телегин юлташ колхозсем государство кивçен панă вăрлăха кўрсе килме тăрăшманнине, çак ĕçе ялхуçалăх пайĕ çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ. Хăшпĕр колхозсенче вăрлăхсене тасатас ĕç япăх пырать. Молотов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхăн 30 процентне çеç тасатса хунă.

Депутат В. Кошкин юлташ «Правда» колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каларĕ. Колхозра ялхуçалăх машинисем юсас ĕç начар.

— Машинăсене юсама запаслă пайсем çитмеççĕ, — терĕ вăл. — Сельхозснаб уйрăмĕ колхоза тимĕр тата запаслă пайсем памарĕ, вăл минераллă удобренисем сахал кўрсе килет, çав удобренисене ирĕкрен укçа тўлесе илме тивет.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен депутат И. Елисеев юлташ каласа пачĕ. Колхозниксем Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул ўстерессишĕн кĕрешме чĕнсе каланине сўтсе явса, çуракине тата уйхирти ытти ĕçсене вăхăтра, агротехника вĕрентнĕ пек туса пыма обязательствăсем илнĕ.

Район Совечĕн сессийĕ çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем туса ирттерме йышăнчĕ.

К. КОЧЕТОВ.

Интернат уçăлчĕ

ЙĔПРЕÇ. Кироври çичĕ çул вĕренмелли шкулта кăçалхи мартăн 1-мĕшĕнче интернат уçрĕç. Интернатра инçетри ялсенчен килекен 12 ача пурăнать. Вĕренекенсем валли кроватьсем, тўшек-минтер, вĕренмелли хатĕрсем çителĕклĕ илсе панă. Апат та хатĕрлесе параççĕ.

Интернат уçни вĕренекенсен пĕлĕвне ўстерме, урoксене лайăхрах хатĕрленме пулăшать.

А. ИСАКОВ.

ТЕАТР

„Çĕр çинчи рай“

Чăвашсен куçса çўрекен колхоз театрĕ юлашки вăхăтра Болгари драматургĕ Орлин Василев çырнă «Çĕр çинчи рай» драмăна кăтартрĕ. Ку драма 1948 çулта Димитровла премине илме тивĕçлĕ пулнă.

«Орлин Василев драми,—тет Болгари литературин паллă представителĕ Людмил Стоянов,—Болгари драматургийĕнче чи лайăх пьесăсенчен пĕри пулса тăрать».

Чăнах та, «Çĕр çинчи рай» драма болгарсен пурнăçĕнчи историллĕ пысăк тапхăра—тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче Болгари патриочĕсем нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешнине кăтартса парать.

Драмăра Витан Лазаров çемйине кăтартнă. Çак çемье тавра пур ĕçсемпе пур геройсем те пĕрлешсе тăраççĕ.

Витан Лазаров—ĕлĕк гвардейски полкра службăра тăнăскер, халĕ отставкăри майор. Çамрăк чух вăл кадетсен корпусĕнче вĕреннĕ. Унта ăна «короле тата çĕршыва» юратма вĕрентнĕ, «наци ирĕклĕхĕн» сĕрĕмĕпе тĕтĕрнĕ. Отставкăна тухнă хыççăн, хăйĕн пурнăçĕшĕн анчах çунакан Витан Лазаров эгоизм лачакине пуçса ларать. Вăл йĕри-тавра кĕрлекен пурнăçран хăрать, унран тарать.

Витан тĕнчерен хăйĕн «çĕр çинчи райĕнче» питĕрĕнсе юласшăн. «Çĕр çинчи рай»—çапла çырса çапнă вăл хăйĕн çуртĕ çине. Çуртне те Витан хула айккине лартнă. «Манăн çурт—телей утравĕ, — тет Лазаров,—унта эпĕ, йĕркесĕре тухнă этемлĕх çине пăхмасăр, хам телее ўстеретĕп».

Витан Лазаров — буржуалла идеологин представителĕ. Хăй пурнăçа активлă хутшăнма хăранине вăл çакăн пек сăмахсемпе тўрре кăларма пăхать: «Пурнăç вăл—пĕрре кăна. Хамăн пурнăçа хамăн пурнăç пулать, çынăн мар».

Лазаровăн çак çĕрĕк «идеологине» хирĕç драмăра социализмла идеологи тăрать. Ку идеологине Лазаров кĕрўшĕ — Савва Величков коммунист хўтĕлет. Савва чухăн прачка Славка аппа патĕнче ўснĕ. Вăл—чăн-чăн коммунист, Георгий Димитров пăхса çитĕнтернĕ ăмăрткайăк чунлă çынсенчен пĕри. Величков—пултарулă организатор, вăл вăрттăн типографи йĕркелесе ун ĕçне ертсе пырать, фашизм пусмăрĕ айĕнче пурăнакан çынсем патне кĕрешĕве чĕнекен листовкăсем çитерсе тăрать, коммунистсен вăрттăн организацийĕн ĕçĕсем пĕтĕмпех унпа çыхăнса тăраççĕ.

Савва подвалта вырнаçнă типографирен Славка аппапа ун ывăлĕ Бойко пурăнакан пўлĕме тухать. Вăл хăйĕн арăмĕ çинчен ыйтса пĕлет. Ун арăмне—пианистка Лильăна арестленĕ иккен. Часах ирĕке кăларнă Лиля та пырса кĕрет. Вăл килни Величковшăн хавaслă та, хаваслах та мар: Лиля гестапоран тӳрех хваттере килни вăл конспираци йĕркисене пĕлменнине кăтартать. Лиля хăйĕн ашшĕпе хирĕçни çинчен пĕлтерет. Лапкăлăха юратакан Витан Лазаров хăйĕн кĕрўшĕ «халăха пăлхатакан» пулнине чăтма пултараймасть иккен. Алăк уçăлса каять те—яшшар тумланнă çиллес Лазаров пырса кĕрет. Кунта вăл хăйĕн «принципĕсем» пирки каласма пуçлать.

— Çĕр çинче мĕн пулса иртнипе манăн нимĕнле ĕç те çук. Эпĕ хам пурнăçа тата хамăн çемьене çеç сыхлатăп,—тет вăл.

— Аслă çĕр кулен çĕршер-пиншер нимĕн айăпсăр çынсен юнĕсемпе пĕвеннĕ чухне, ухмаха ернĕ ефрейтор тĕнчерен концентраци лагерĕ туса хума тапаçланнă чухне, Майданекпа Освенцим вучĕсем ялкăшнă чухне хамăр çуртсен стенисем хыçне пытанса юлас-и, кроликсем ўстерсе, Гитлер валли ăшă мамăк хатĕрлесе ларас-и?—тет ăна хирĕç Савва.—Çук, эпĕ, хамăн пурнăçшăн анчах çунса, аслă кĕрешўрен пăрăнса юлмастăп. Эпĕ кĕрешетĕп!

«Пусмăрпа асап тинĕсĕ варринчи телей утравĕ»,— тет Лазаровăн «Çĕр çинчи райĕ» пирки Славка аппа. Çапла икĕ хире-хирĕç вăй, икĕ идеологи хушшинчи конфликт чăрре кĕрсе каять. Кĕрешў нумайччен пырать. Витĕрех суя идеологипе шўнĕскер, Лазаров «нимĕн те ăнланмасть, ăнланасшăн та мар». Вăл, лăпкă пурнăçпа пурăнтарас тесе, хĕрне хăй патне илсе каять. Лиля каяссăн мар, анчах конспираци условийĕсенче пĕрле пурăнма çуккине шута илсе, ăна Савва килне кайма хушать.

Савва тусем хушшине партизансем патне каять, вĕсен паттăрла кĕрешўне ертсе пырать. Çав вăхăтрах Лазаров ывăлĕ Борис çарта службăра тăрать. Вăл, тăван çĕршывпа тăван халăха çеç мар, хăйĕн чысне те сутса ĕçсе янăскер, Славка аппа ывăлне Бойкăна нимĕçсене тытса парать. Борис хăйĕн ашшĕн «чысĕ, мухтавĕ, шанчăкĕ» пулнă. Ывăлĕн ирсĕр ĕçĕ çинчен пĕлсен, хăйĕн чысне çўле хуракан Лазаров çĕр çинче икĕ вăй—таса вăй, ирĕклĕхшĕн, пĕтĕм этемлĕхĕн çутă пуласлăхĕшĕн тăракан вăй тата хура, тискер вăй, этемлĕхе хирĕç пыракан вăй пуррине туйса илет. Ку çеç те мар, Витан куçĕ умĕнчех унăн çемйи — «Çĕр çинчи рай» стенисем ăшĕнче упраса ўстернĕ çемье—арканса каять. Лазаров хĕрĕ Лиля, унччен иккĕленўллĕрех пулнăскер, халĕ ĕнтĕ уççăнах Величковпа Славка аппа енне тăрать. Савва Бориса арестлет, унăн сумкинче нимĕç командованийĕ партизансене хирĕç хатĕрлекен операци планне тупать. Величковпа Славка аппа партизансем патне тухса каяççĕ, Лиля Бориса сыхлама юлать. Тревогăпа усă курса, Борис кантăкран сикме тăрать, анчах Лиля ăна—хăйĕн тăван пиччĕшне—персе ўкерет.

Йĕри-тавра бомбăсем çурăлаççĕ, Лазаров çурчĕ кисренсе каять.

— Мĕне пĕлтерет ку?—хăраса ўксе кăшкăрать Раина—Витан арăмĕ.

— Ку вăл «çĕр çинчи рай» пĕтнине пĕлтерет,—ответлет Лазаров хăйĕн арăмне. Залра ку сăмаха хирĕç куракансен кулли янраса каять. Çапла вара, Лазаровăн «çĕр çинчи райĕнчен» кулăш çеç тăрса юлать.

Орлин Василев драми—хумхантаракан, ирĕклĕхе юратма вĕрентекен произведени. Ăна лартса, чăвашсен куçса çўрекен колхоз театрĕ усăллă, кирлĕ ĕç тунă. Спектакле лартаканĕ И. Д. Краснов тата театр коллективĕ Болгарири коммунистсен кĕрешўри ертсе пыракан рольне, болгарсем Совет Союзне, вырăс халăхне тăванла юратнине кăтартас тесе нумай тăрăшнă. Акă, спектакльти чи хумхантаракан, чи ăшă сценăсенчен пĕри. Бойко коммунист амăшĕнчен ыйтать:

— Анне, эсĕ Мускав тăшмансене çĕнтерессе ĕненетĕн-и?

— Ĕненетĕп, Бойко ывăлăм,—шанчăклăн, çирĕппĕн ответлет Славка аппа.—Мĕншĕн тесен унта—Сталин.

— Сталин!—Бойко куçĕсем шанчăкпа ялкăшаççĕ.—Сталин... Унта çеç халь пирĕн шанчăк.

Пĕтĕмĕшпе илсен, спектакль драмăн пĕтĕм пахалăхне куракансем патне илсе çитереймест-ха.

«Искусствăн, çав шутрах театрăн та, тĕллевĕ—пьесăпа рольсен шалти пурнăçне кăтартасси, произведени çуратнă тĕп шухăша сцена çинче уçса парасси»,—тенĕ К. С. Станиславский. Çак тĕп шухăша спектакль куракансем патне туллин илсе çитереймест. Спектакле лартаканпа артистсем умĕнче пысăк ыйту—кивĕ тĕнчепе çĕнĕ тĕнче хушшинчи конфликта кăтартса парасси пулнă, çак конфликтăн çивĕчлĕхĕ спектакльте мăкалса юлнă, çак конфликт çемьери ахаль харкашу пек çеç пулса тухать. Кĕрешўре Саввăпа ун майлисем çирĕп тăраççĕ, вĕсем çĕнтереççĕ. Витан Лазаров сăнарĕ пулса çитеймен пек туйăнать. Ку роле куракансем юратакан, опытлă артист Трофим Соловьев вылять. Лазаров-Соловьев хăйĕн лăпкăлăхĕшĕн çунни лайăх палăрать, анчах вăл çав канлĕхшĕн кĕрешни курăнмасть.

Драмăри тĕп тема—Болгарири коммунистсен партийĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешсе ĕçре халăха ертсе пыни. Ку темăна та театр кирлĕ таран татса парайман. Коммунистсен партийĕн драмăри представителĕсем—Савва Величковпа Бойко, Славка аппа. Куракансене пуринчен ытла Бойко рольне вылякан Иван Кудянов кăмăла каять. Коммунистла агитацишĕн Бойкăна университетран кăларса янă, вăл амăшне прачка ĕçĕнче пулăшма пуçлать, çав вăхăтрах коммунистсен партийĕн ĕçĕсене хастарлăн туса пырать. Бойко—хаваслă, пуçне усман çамрăк коммунист. Унра иксĕлми вăй-хал вĕресе тăни сисĕнет, çав вăхăтрах епле ырă туйăмлă, таса чĕреллĕ çак çын!

Славка аппа рольне Мария Бикулова артистка вылять. Славка аппа упăшкине фашистсем вĕлернĕ, Славка пурнăçра чылай хĕн-хур курнă, анчах та вăл пуçне усмасть. Вăл хăйĕн ывăлне—Бойкăна коммунист туса ўстерет. Вăл çĕнтерў килессе çирĕп ĕненет, малалла шанчăклăн пăхать.

Бойкăна вĕлерни уншăн чи йывăр асап, чăтмалла мар инкек; ывăлĕсĕр пуçне унăн урăх никам та çук. Анчах ку инкеке те Славка аппа çирĕп чăтса ирттерет, эпир ăна каллех паттăрсен ретĕнче куратпăр.

Мария Бикулова—пултарулă артистка. Славка ролĕнче вăл хăйĕн пултарулăхне татах кăтартса пачĕ. Акă Славка-Бикулова хăйĕн ывăлне нимĕç хурахĕсем вĕлерни çинчен каласа парать. Унăн пичĕ шурса кайнă, куçĕсем çунаççĕ, вĕсенче куççулĕ йăлтăртатать. Ку сценăра Бикулова куракансене чĕререн хумхантарать. Бикуловăна, унăн мастерлăхне аталантарма пулăшас тесе, çакна та каласа хăварас килет. Хăшпĕр мимикăсем, ўт-пў хусканăвĕсем унăн штамплăрах пек туйăнаççĕ, хăш чухне артистка чăн-чăн туйăмсемсĕр выляни те сисĕнет.

Драмăри тĕп герой—Величков.

Величков—кĕрешў вутĕнче пиçсе тĕрекленнĕ коммунист. Вăл хăйĕн пĕтĕм вăй-халне йăлтах парти ĕçне парать. Çав вăхăтрах вăл арăмне чĕререн юратать, ăна тĕрĕс çул çине кăларасшăн тăрăшать. Çак çутă та илемлĕ, çав вăхăтрах кăткăс сăнара Н. Андреев артист чылай шупкалатса хăварнă. Вăл сăнласа паракан Савва хăйне мăнаçлăрах тытать, янравлă каласма юратать. Арăмĕпе калаçнă чухне те Величков-Андреев чĕресĕр çын пек калаçать. Савва хăйне-хăй çемьере епле тыткаланине курсан, ăна типĕ, туйăмсăр çын теме пулать. Величковăн ертсе пыракан рольне те артист çителĕксĕр кăтартать. Н. Андреев ку роле тĕплĕ туса çитересе шанас килет.

Савва арăмĕн, Лильăн, ролĕ вара вуçех тухман тесе пулать. Анна Пермякова артистка ку роле ячĕшĕн çеç выляни сисĕнет. Акă, иккĕмĕш актра Лильăпа Савва тĕл пулаççĕ. Вĕсем, ятне тумалăх пĕрре ыталашса чуптунă хыççăн, тўрех политика пирки каласма пуçлаççĕ. Мăшăрсем ĕнер анчах уйрăлса паянах тĕл пулнă пек туйăнать, анчах вĕсем пĕр-пĕрне курманни—икĕ çул ытла иккен!

Ку вара куракансене тĕлĕнтерет. Икĕ çул хушшинче те Саввăпа Лиля кăштах та улшăнманни, ўсменни пĕтĕм спектакль юхăмне хирĕç пырать.

Лазаров ывăлĕ Борис—сутăнчăк, этем сăнне çухатнă çын. Вăл Бойкăна нимĕçсене укçашăн тытса парать. Борис чăнах та çынлăхран тухнине пĕр сценăрах курма пулать.

Борисăн ашшĕ-амăшне юратасси те пĕтнĕ. Унăн амăшĕ (ку роле Вера Казанкова артистка лайăх вылять) ывăлĕшĕн питех те хурланать, анчах ку Борисшăн нимĕн те мар. Çак чунсăр мародер ашшĕне те персе вĕлерме хатĕр. Савва ăна арестленĕ хыççăн Борисăн вĕçкĕнле маски йăлтах сĕвĕнсе ўкет, пирĕн умра—пўтсĕр, йĕрĕнчĕк хăравçă.

Иван Кудянов, пĕрремĕш актра Бойко рольне выляканскер, Борис рольне те вылять. Куракан вăл икĕ рольте те вылянине туйсах та каймасть. Ку роле те Кудянов лайăх тытса пырать.

Пĕр-ик сăмах артистсен чĕлхи пирки. Драмăна чăвашла И. Д. Краснов куçарнă. Калас пулать, куçару чĕлхи чылаях тумхахлă, ку вара артистсен вăййине те чылаях чăрмантарать. Чăвашла спектакльте час-часах: «да», «конечно» тенисем илтĕнеççĕ. Çакăн пек сăмахсем те тĕл пулаççĕ: мученик, убеждени, отличипе, решени, химара, политически кроликсем, обязанность т. ыт. те. Ку вара сцена чĕлхине чухăнлатни çеç пулать.

Театр художникĕ Н. Яковлев декорацисене питĕ шупка, начар çырнă, Мясников машинист ĕçĕ те сисĕнсех каймасть. Çаксем спектакль хакне чакараççĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, театр коллективĕ «Çĕр çинчи рай» спектакле туса çитерейменех-ха. И. Д. Краснов режиссерпа театр коллективĕ татах тăрăшса ĕçлесен, «Çĕр çинчи рай» илемлĕ те вăйлă спектакль пуласса çирĕп шанма пулать.

Г. ЛИСИН.

Совет Союзĕпе Швеци хушшинчи суту-илӳ çинчен

Совет Союзĕпе Швеци суту-илӳ делегацийĕ хушшинче калаçусем ăнăçлăн вĕçленнĕ. Кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче Мускавра Совет Союзĕпе Швеци хушшинчи 1953 çулхи тавар çаврăнăшĕ çинчен протокол çине алă пуснă.

Çак килĕшӳ тăрăх Совет Союзĕпе Швеци 1953 çулта унчченхи çулсенче улăштарса илнĕ таварсене пĕр-пĕрне тăратаççĕ.

Калаçусем икĕ енĕ те пĕр-пĕрине суту-илӳ тăвассине аталантарма тăрăшнине кăтартнă.

Протокол çине: Совет Союзĕ енчен — СССР Шалти тата тулашри суту-илӳ министрĕ А. И. Микоян, Швеци енчен — Швецин чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ Р. Сульман господин алă пуснă.

(ТАСС).

Венгрире пахча çимĕç хакĕсене йӳнетнĕ

БУДАПЕШТ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгрире апрелĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа пахча çимĕçсен вакăн сутмалли хакĕсене йӳнетмелле тунă. Çĕрулми хакĕ 12,5 процент, пăрçа йышши культурăсен хакĕ 27 процент тата купăста хакĕ 10 процента яхăн йӳнелет.

Марна çинчи Шампиньи хулинчи площадре И. В. Сталин ятне панă

ПАРИЖ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Марна çинчи Шампиньи хулинчи (Сена департаменчĕ) площаде И. В. Сталин ятне панă ятпа митинг пулса иртнĕ. Митингра хула мэрĕ мирпе халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетессишĕн кĕрешес ĕçре И. В. Сталин пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен сăмах каланă. Францири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе генерал Жуэнвиль сăмах тухса каланă. Совет Союзĕн Францири Посольствин советникĕ Н. И. Корюкин ответлă сăмах каланă.

Великобританири Коммунистсен партийĕн йышĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 10-мĕшĕнче Великобританири Коммунистсен партийĕ хăйĕн членĕсене регистрацилесе тухни çинчен пĕлтернĕ. Регистрацине тăнă парти членĕсем 34.801 çын шутланаççĕ.

«Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ку шута вырăнти организацисем тăратса çитереймен регистраци анкетисене тата март уйăхĕнче партие çĕнĕрен илнĕ членсене кĕртмен. Вĕсене шута илсен, Великобританири Коммунистсен партийĕн ретĕнче пĕтĕмпе 36 пин çынна яхăн тăрать.

Италири хĕрарăмсен съезĕнче

РИМ, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Демократилле хаçатсем Италири хĕрарăмсен съезĕнче Италири хĕрарăмсен союзĕн председателĕ Мария Маддалена Росси тунă доклада пичетлесе кăларнă. Росси пур ĕçре те хĕрарăмсен пурнăçĕ арçынсен пурнăçĕнчен начартарах пулнине палăртнă. Хĕрарăмсем государство е уйрăм харпăрлăхлă секторсенче ĕç илме пултараймаççĕ. Хĕрарăмсемшĕн пĕр-пĕр специальноçа вĕренме те йывăр. Пĕр пек ĕçшĕнех хĕрарăмсене арçынсенчен сахалтарах тӳлеççĕ. Чылай работницăсем çулталăк хушшинче темиçе уйăх кăна ĕçлеме пултараççĕ. Ĕç укçи вĕсене ытла та сахал тӳлеççĕ.

Ĕçлеме пултаракан хĕрарăмсенчен 62 проценчĕ ĕç тупаймасть. Ĕç тупайман хĕрарăмсен хисепĕ Калабрире—79 процента, Сардинире — 89 процента, Сицилире—92 процента çитет.

Мария Маддалена Росси çапла каланă: ĕçсынни хĕрарăмĕсен икĕ тĕп ыйтăвне — пĕр пек ĕçшĕн пĕр тан тӳлесси тата ача амăшĕсемпе вĕсен ачисене пулăшасси çинчен тăракан ыйтусене хуçасем те, государство учрежденийĕсем те тивĕçтермеççĕ.

Ачасем хушшинче вилекенсен шучĕ питех те пысăк.

Италире ачасене вĕренме 86 пин класс çитмест, 80 пин учитель ĕç тупаймасть.

Правительство хĕçпăшалланас тĕлĕшпе тытакан политика, тенĕ юлашкинчен Росси, çĕршыв пурнăçне начарлатса çитерчĕ, вăл Италие вăрçă çулĕ çине кăларса тăратма пултарать. Итали хĕрарăмĕсен миршĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче пымалла, çĕнĕ вăрçа сирсе ярас тĕлĕшпе Совет Союзĕ ертсе пыракан вăйсемпе пĕрлешсе кĕрешмелле.

Франци халăхĕ Морис Тореза саламлать

ПАРИЖ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францири Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез тăван çĕршыва таврăннине Францири ĕçсыннисем чĕререн саламлаççĕ. «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Францири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те телеграммăсемпе саламсем вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Даг Хаммаршельд ООН генеральнăй секретарĕн ĕçне официальнăй йĕркепе тытăннă ятпа Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕ пулнă. Генеральнăй Ассамблея председателĕ кĕске сăмах каланă хыççăн, Даг Хаммаршельд присяга панă. Çĕнĕ генеральнăй секретарь кĕске сăмах каланă, ООН Уставĕнче каланисене пурне те пурнăçласа пыма пулнă. Çакăн хыççăн чылай çĕршывсен представителĕсем, Даг Хаммаршельда çак ответлă ĕçре çитĕнӳсем тума ыра сунса, саламлă сăмахсем каланă. Совет делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

Хăрушсăрлăх Совечĕ Даг Хаммаршельда генеральнăй секретарь пулса ĕçлеме суйлама сĕннине Генеральнăй Ассамблея йышăннă кун Совет делегацийĕ ăна саламларĕ.

Уя чухне эпир пĕтĕм тĕнчери организаци пулса тăракан Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăни çинчен аса илтертĕмĕр. Миршĕн, халăхсем хушшинчи хăрушсăрлăхшăн, халăхсем пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлессишĕн пыракан кĕрешӳре Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн пĕлтерĕшне чакарма та, хакламасăр тăма та çук.

Эпĕ паян килсе тухнă майпа усă курса Даг Хаммаршельда—Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн генеральнăй секретарьне совет делегацийĕ ячĕпе саламлатăп. Çакăнпа пĕрлех господин Хаммаршельд генеральнăй секретарь ĕçĕсене тивĕçлипе туса пырасса шанса тăратпăр.

Эпир ăна Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн генеральнăй секретарĕ пулса ĕçленĕ чухне çитĕнӳсем тума ыра сунса каланине йышăнма ыйтатпăр.

Çĕнĕ генеральнăй секретаре ĕçре çитĕнӳсем тума ыра сунса, Польша ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Скшешевский, Украина ССР делегацийĕн пуçлăхĕ Барановский тата Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ Киселев саламлана.

Политикăллă комитетра

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнерхи ирхи ларура Политикăлла комитет Польша делегацийĕ çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас, мире тата халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетес ыйту тăрăх тăратнă сĕнӳсене сӳтсе явнă.

Ларура США, Бельги, Перу, Эквадор делегачĕсем тата гоминдан агенчĕ тухса каланă.

США представителĕ Гросс Польша сĕнĕвĕсене пурне те хирĕç пулнă, делегатсене Польша тăратнă резолюци проектне сирсе яма чĕннĕ, мĕншĕн тесен, тенĕ вăл, çак проектра каланă сĕнӳсене пурне те Генеральнăй Ассамблейăра «сӳтсе явнă тата сирсе пăрахнă».

Гросс агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика пактне мухтаса каланă, унăн аслă державăн хушшинче Мир Пакчĕ тăвасси çинчен Польша тăратнă сĕнĕве хирĕç каланă.

Бельги, Перу тата Эквадор представителĕсем те Польша сĕнĕвĕсене хирĕç тухса каланă. Вĕсем сăмахĕсем США представителĕн сăмахĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман.

Ларăва хупас умĕн Канада представителĕ тухса калама шутлакансен списокне апрелĕн 10-мĕшĕнче каçхине 6 сехет тĕлне çĕнĕ ораторсем кĕртме чарасси çинчен сĕнӳ панă. Çакăнпа вăл Польша сĕнĕвĕсене сӳтсе явассине путлантарса лартма хăтланнă. Канада делегацийĕн сĕнĕвĕ вырăнсăр тата çак сĕнĕвĕн тĕллевĕ ытла та сĕмсĕр пулнă пирки, Канада делегачĕн сĕнĕвне Франци тата ытти хăшпĕр çĕршывсен представителĕсем те йышăнман. Польша тата Украина ССР представителĕсем Польша сĕнĕвĕсене «сӳтсе явассине вĕçлес тĕлĕшпе ытлашши васкани пулмалла мар, тенĕ, делегатсене Польша делегацийĕн резолюци проектне тĕплĕн сӳтсе явма чĕннĕ. Çак резолюци проектĕнче мĕнпур тĕнчери халăхсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ сĕнӳсем тăратнă. Канада делегачĕ, çак сĕнӳ путланса ларасси куç кĕретĕнех палăрсан, хăйĕн сĕнĕвне калла илнĕ.

Комитетăн çитес ларăвĕ апрелĕн 13-мĕшĕнче пулать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чăсĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен разведка тăвакан отрячĕсемпе тытăça-тытăça илнĕ.

Ĕнер çĕрле Америка авиацийĕ Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Пакчхонь уездĕнчи мирлĕ ялсем çине çĕнĕрен тапăннă, бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисем нумай.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чăсĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америка авиацийĕ Сунчхонь тата Кандон районĕсенчи ялсем çине çĕнĕрен тапăннă, бомбăсем пăрахнă. Хресченсем хушшинче вилнисем нумай. Чылай çуртсем ишĕлнĕ тата çунса кайнă.

Зенитнăй чăсĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ КОРЕЙĂРИ МИРЛĔ ХАЛĂХ ÇИНЕ ÇАПЛĂХ БОМБĂСЕМ ПĂРАХАТЬ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине çаплах тапăнать. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕнче Америкăн йышлă бомбардировщикĕсемпе штурмовщикĕсем Хванхэ провинцийĕнчи Вонсан уездĕнчи мирлĕ ялсем çине хаяррăн тапăннă. Апрелĕн 6-мĕшĕнче «вĕçекен крепость» йышши йывăр бомбардировщиксем çак уездри мирлĕ ялсем çине тепĕр хут тапăннă. Вĕсем пĕр сехет хушшинче 800 бомба ытла, вăл шутра напалмлă бомбăсем нумай пăрахнă. Çавăн пек икĕ хут тапăннă хыççăн Вонсан уезĕнче вилнисемпе аманнисем нумай пулнă. Хресченсен çурчĕсене 200 яхăн ишĕлтерсе хăварнă тата çунтарса янă.

Юлашки кунсенче Америка авиацийĕ Хванхэ провинцийĕнчи районсем çине уйрăммăнах хытă тапăнать. Америка авиацийĕ çак провинцири 12 уездри ялсем çине апрелĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа 6-мĕшне çитиччен 26 хутчен бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

ПАНЬМЫНЬЧЖОНРИ КАЛАÇУСЕМ

ПЕКИН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай делегацийĕ апрелĕн 10-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Паньмыньчжонра апрелĕн 10-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре икĕ енĕн сыхăну ушкăнĕсен пиллĕкмĕш ларăвĕ пулнă. Икĕ енĕ те тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен калакан килĕшӳ проекчĕ пирки, тĕрĕссипе илсен, пĕтĕмпех каласса татăлнă. Икĕ енĕн тăлмачĕсем корея, китай тата акăлчан чĕлхипе çырса хатĕрленĕ килĕшӳ проекчĕн текстĕсене тĕрĕслесе тухнă. Текстсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Корейăпа Китай енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ генерал Ли Сан Чо çапла каланă: Корейăпа Китай енĕ тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен калакан килĕшӳ çине апрелĕн 11-мĕшĕнче алă пусма сĕнет тата тепĕр енĕн аллинче те килĕшĕвĕн официальнăй текстĕ хатĕр пуласса шанса тăрать.

Каçхине 5 сехет те 05 минутра тепĕр енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ, конференци иртерекен район хуралĕн офицерĕсем урлă, тепĕр енĕ Корейăпа Китай енĕн сĕнĕвĕпе килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

Паянхи ларура генерал Ли Сан Чо тепĕр енне çапла пĕлтернĕ: малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, пирĕн алăра тăракан тыткăнри чирлĕ тата аманнă çынсем хушшинче, Корея çыннисемсĕр пуçне, çакăн пек наци çыннисем пуррине палăртнă: 120 çынна яхăн — американецсем, 20 çынна яхăн—акăлчансем, тата 15 çынна яхăн—ытти наци çыннисем—туроксем, канадецсем, грексем, голландецсем.

Сыхăну ушкăнĕсен штаб офицерĕсен апрелĕн 10-мĕшĕнче пулнă виççĕмĕш ларăвĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатрицилеме административлă ĕççене йĕркелес тĕлĕшпе малалла ĕçленĕ тата икĕ енĕ валли те Паньмыньчжонра, конференци иртерекен районта, тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене йышăнмалли вырăнсем палăртнă.

Сыхăну ушкăнĕсен улттăмĕш ларăвне апрелĕн 11-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре иртерме килĕшнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжонран пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен сыхăну офицерĕсен пуçлăхĕ контр-адмирал Даниэль: тыткăнри çар çыннисене улăштарса илес пирки хатĕрленĕ килĕшӳ проекчĕ пирки, «чăнниппе», каласса татăлнă, тенĕ. Ăна «татăклăн ырлама» Пĕрлешнĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй комиссарне Кларк генерала ярса панă.

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчĕ çапла пĕлтерет:

Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен командованийĕн сыхăну офицерĕсен ушкăнĕн пуçлăхĕ контр-адмирал Даниэль çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешнĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командующийĕ генерал Кларк тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен туса хатĕрленĕ килĕшӳ проектне паян ырланă, проект хатĕр.

Паньмыньчжонра тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тунă килĕшӳ çине алă пуснă

Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин ятарласа кайнă корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Паян кăнтăрла икĕ енĕн сыхăну ушкăнĕсем тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвасси (тăван çĕршыва ярасси) çинчен йышăннă килĕшӳ çине алă пуснă. Çак килĕшĕве алă пуснă хыççăн тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва пĕтĕмĕшпе татса парас тата Корейăра перемири тăвас тĕллевпе халех калаçусем пуçласа ярас ыйту тухса тăрать.

Генерал Ли Сан Чо «Корейăра перемири тăвас тĕллевпе тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва сӳтсе явса татса парас тесе», икĕ енĕн делегацийĕсен пĕрлехи ларăвĕсене халех иртерме тытăнма сĕннĕ. Вăл çакна кăтартса панă: Америка командующийĕ Кларк хăйĕн ответĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илесси çинчен тăракан ыйтăва аслăн татса панă хыççăн, тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва нимĕн чăрмавсăр йĕркелесе ямалла, тенипе килĕшни çинчен каланă.

Перемири çинчен калаçусене хăш кун пуçламаллине паян палăртман, мĕншĕн тесен контр-адмирал Даниэль сыхăну ушкăнĕсен ларăвне вăл хăйĕн сыхăну офицерĕсем урлă пĕлтеричченех ларса лартма сĕннĕ. Генерал Ли Сан Чо çакăнпа килĕшнĕ, анчах вăл перемири çинчен калаçу пуçласа ямалли куна палăртасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явма сыхăну ушкăнĕсен ларăвне 1—2 кун хушшинче тепĕр хут иртерме сĕннĕ. Даниэль çакăнпа килĕшнĕ.

Тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен йышăннă килĕшӳ çине Паньмыньчжонра Корейăпа Китай енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ генерал Ли Сан Чо тата Америка енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ контр-адмирал Даниэль алă пуснă. Вĕсем ларакан палатка тавра 100 çынна яхăн корреспондентсем, фотокорреспондентсем, кинооператорсем, килĕшӳ çине алă пусасса кĕтсе, пухăнса тăнă.

Килĕшӳ çине алă пусас умĕн генерал Ли Сан Чо заявлени вуласа панă, унта çапла каланă: Корейăпа Китай енĕн «хальхи вăхăтра репатриаци туман сирĕн алăри тыткăнри чирлĕ тата аманнă пирĕн çар çыннисене, вĕсене репатриацилесси çинчен тăракан ыйтăва перемири тунă хыççăн тĕрĕс татса парас шутпа, нейтральнăй государство аллине пама требовани лартма право пур».

Корейăпа Китай енĕ мире хӳтĕлес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсем Корейăра перемири тума кансĕрлесе тăракан пĕртен-пĕр чăрмава—тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса парас тĕлĕшпе делегацисен ларăвне халех пуçласа яма кирлĕ майсем туса пачĕç. Нумаях пулмасть Китай Халăх Республикин Государство администраци совечĕн премьерĕ Чжоу Энь-лай тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн председателĕ Ким Ир Сен çак ыйтăва татса парас тĕлĕшпе çĕнĕ сĕнӳ тăратрĕç. Çакăн хыççăн генерал Нам Ир Америка делегацийĕн пуçлăхĕ Гаррисон патне çыру ячĕ, унта çав сĕнӳ çинчен тĕплĕн ăнлантарса панă. Çырăва ĕнер сыхăну ушкăнĕсен ларăвĕ пынă вăхăтра панă. Генерал Ли Сан Чо халĕ делегацисен ларăвĕсене пуçласа ямалли куна палăртасси çинчен сӳтсе явма сĕннĕ. Корейăпа Китай енĕн çĕнĕ сĕнĕвне пурнăçа кĕртмелли конкретлă мероприятисене делегацисен ларăвĕсенче сӳтсе явма пулать. Тĕнчери мирлĕ пурнăçа юратакан мĕнпур çынсем Паньмыньчжонь çине тимлĕн пăхса тăраççĕ. Вĕсем çакна пĕлесшĕн: Корейăра перемири тăвас тĕлĕшпе Америка правительстви чăннипех тăрăшать-и? Америка правительстви перемири тума чĕререн тăрăшнине тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса парас тĕллевпе перемири тăвасси çинчен каллех калаçу пуçласа яни кăтартса парĕ.

Корейăпа Китай делегацийĕсем пĕлтерни

ПЕКИН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Икĕ енĕн штаб офицерĕсем апрелĕн 12-мĕшĕнче ирхине тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене репатриаци тăвас тĕлĕшпе административлă ĕççене сӳтсе явма тĕл пулнă. Ларура икĕ енĕ те çак ыйту тăрăх пĕр-пĕрине каласса татăлнă.

Корейăпа Китай енĕ хăйĕн аллинчи тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене апрелĕн 20-мĕшĕнче Паньмыньчжонра репатриаци тума пуçласси çинчен тепĕр енне пĕлтернĕ. Корейăпа Китай енĕ аллинче тăракан чирлĕ тата аманнă çар çыннисен пĕрремĕш ушкăнне Чхонмэ лагерĕнчен апрелĕн 14-мĕшĕнче илсе тухмалла, Корейăпа Китай представителĕсем тепĕр енне те хăйĕн аллинчи тыткăнри тата аманнă çар çыннисене çавăн пекех Паньмыньчжонра апрелĕн 20-мĕшĕнче репатриаци тума сĕннĕ. Тепĕр енĕ çакăнпа килĕшнĕ.

Концентрационнăй лагерьсенче пулнă çынсене ирĕке кăларнă куна паллă туни

БЕРЛИН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла концентрационнăй лагерьсене хупса лартнă çынсене Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем ирĕке кăларнă кун ячĕпе апрелĕн 11-мĕшĕнче Демократиллĕ Германи Республикинчи мĕнпур округсемпе районсенче ĕçсыннисен митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртнĕ.

«Нейес Дейчланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Веймар хулинчи тата унăн çывăхĕнчи çĕршер çынсем ĕнер Бухенвальдри концентрационнăй лагерь пулнă вырăна, фашистсем вĕлернĕ паттăр борецсен ятне хисеплеме пынă. Ĕçсыннисем паттăрсен вилтăприсем çине чечек кăшăлĕсем нумай хунă. Çак лагерьте 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнче нимĕç рабочи класĕн çулпуçне Эрнст Тельмана тискеррĕн вĕлернĕ.

Котбус хулинче митинга 25 пин çын ытла пухăннă. Митингра Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министрĕн заместителĕ Генрих Рау сăмах тухса каланă.

Çак кун ячĕпе Дрезден хулинче пулнă митинга çĕр пин çын ытла хутшăннă.

Митингсем çавăн пекех Гер, Эрфурт, Шверин тата ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

БЕРЛИН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра гитлерла концентрационнăй лагерьсенче пулнă çынсене ирĕке кăларнă кун ячĕпе массăллă митинг пулса иртнĕ. Митинг: «Халăх хирĕç тăни Боннпа Париж договорĕсене пурнăçлама чăрмантарĕ» текен лозунгпа иртнĕ.

Митингра йышăннă резолюцире Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин мирлĕ пуçарăвне ырланă. Резолюцире çавăн пекех тата Германи ыйтăвĕ тăрăх Совет Союзĕ тăватă держава конференцине пухасси çинчен панă сĕнĕве йышăнма ыйтса требовани лартнă, çар договорĕсене Бонн бундестагĕ ратификацилеинне хирĕç хыттăн протестленĕ.

ЭЙЗЕНХАУЭР США СЕНАТНЕ ЯНĂ ПОСЛАНИ

БЕРЛИН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Гамбургри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер президент Эйзенхауэр Америка сенатне Германин вăрçăчченхи парăмĕсем çинчен тунă килĕшĕве ратификацилеме тăратнă. Çак килĕшӳ тăрăх Германин вăрçăччехи тата вăрçă хыççăнхи парăмсене 18 çĕршыва пурĕ 16 миллиард марка яхăн укçа тӳлемелле.

Инкубатор станцийĕсенче ĕçлекенсен канашлăвĕ

Шупашкарта инкубаторпа кайăк-кĕшĕк станцийĕсен директорĕсен тата аслă зоотехникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу инкубаторпа чĕпсем кăларас ĕçĕн 1952 çулхи итогĕсем тата çак ĕçе малалла лайăхлатса пырас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР-ĕнчи инкубаторпа кайăк-кĕшĕк станцийĕсен кантурĕн аслă зоотехникĕ Е. Тихонова юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ.

Апрель уйăхĕнче республикăри 17 инкубатор станцийĕ ĕçлеме тытăнать. Государство планĕ тăрăх, вĕсен кăçалхи апрель-июль уйăхĕсенче колхозсене пĕр миллион та 600 пин чĕп кăларса памалла. Чкаловскинчи, Вăрнарти, Вăрмарти тата ытти хăшпĕр станцисем чĕпсем кăларма лайăх хатĕрленнĕ. Сăмахран, Чкаловскинчи станцийĕнче (директорĕ Миронов юлташ) инкубаторсемпе электростанцие ĕçе хатĕрлесе çитерне, станци Шăмăршă, Пăрвомайски тата Чкаловски районĕсенчи пур колхозсемпе те чĕпсем кăларса парас тĕлĕшпе договор тунă, колхоз фермисенче ĕçлеме, чĕпсем пăхма 21 çын вĕрентсе хатĕрленĕ.

Анчах республикăри чылай инкубаторпа кайăк-кĕшĕк станцийĕсем чĕпсем кăларма хатĕрленсе çитмен-ха. Улатăрти станцире кивĕ инкубатора халĕ те юсаса пĕтермен, çĕнĕ инкубатора вырнаçтарса лартман. Сĕнтĕрвăрринчи, Çĕмĕрлери, Красноармейскинчи тата Муркашри станцисенче те инкубаци сезонне хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсене пурнăçламан.

Çĕмĕрлери, Сĕнтĕрти тата Парачкаври станцисем колхозсемпе договор тăвассине вăраха тăсса пыраççĕ. Шăхасан, Октябрьски, Тăвай, Муркаш тата Советски районĕсенчи колхозсем чĕпсене йышăнса илме тата вĕсене пăхса ӳстерме питĕ япăх хатĕрленеççĕ.

Канашлура Вăрнарти инкубатор станцийĕн аслă зоотехникĕ А. Иванов юлташ чĕпсем кăларас ĕçри паха опытпа паллаштарчĕ.

Пысăк вылявсем

ЕЛЧĔК. Районта СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли 4-мĕш государство заемĕн 7-мĕш тиражĕ тăрăх выляв нумай тухнине палăртнă.

Районти перекет кассисем юлашки кунсенче кăна 500 пин тенке яхăн выляв укçи тӳленĕ. Çак тиражра Тускел ял çынни Иванов тата «Путь Ленина» колхозри колхозница Блинова юлташсем 12.500-шер тенкĕ выляса илнĕ. 5.000, 1.000-шер тенкĕ выляса илнисем чылай.

Е. ЕРТМАКОВ.

Атăл çинче

Юлашки икĕ талăк хушшинче Шупашкар тĕлĕнче Атăл шывĕ 76 сантиметр, кăçал çуркунне шыв хушăнма пуçланăранпа 4 метр та 14 сантиметр хушăннă.

Ĕнер кăнтăрла, вырăнти вăхăтпа 14 сехет те 40 минутра Шупашкар тĕлĕнче пăр тапранчĕ. Пĕлтĕр пăр малтанхи хут апрелĕн 25-мĕшĕнче тапраннă.

Калининран пассажирсем лартса çӳрекен малтанхи пăрахутсемпе буксирсем тухнă. Ярославльпе Горький хулисем тĕлĕнче вырăнти флот ĕçлеме пуçланă.

Горькирен анаталла. Кстов тĕлне çитиччен талкăшпех пăр юхнă, Васильсурскпа Козьмодемьянск тĕлĕнче пăр тапраннă. Хусан патĕнче пăр юхнă.

Саратов тĕлĕнче пăр тапраннă. Сталинградран анаталла пăр юхать. Астрахань тĕлĕнче Атăл пăртан пĕтĕмпех тасалнă.

ПĔЛТЕРНИ

Апрелĕн 14-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче консультантсене тата парти историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх пĕрремĕш çул вĕренекен кружок руководителĕсем валли лекци пулать. Тема: «Большевиксен партийĕн теориллĕ никĕсĕсем. В. И. Ленинăн «Материализм тата эмпириокритицизм» ятлă произведенийĕ». Лектор — Г. Г. Германов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 14-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Энтип». Пуçламăшĕ 20 сехетре.

КИНО

«РОДИНА» — апрелĕн 12-мĕшĕнче 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Валерий Чкалов», ытти сеанссенче «Анна Каренина», 16 тата 20 сехетре—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре—иккĕмĕш сери. «УДАРНИК» — «Друзья и враги Америки».

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ

„ЛЮБОВЬ ЯРОВАЯ“

(К. Тренев пьеси)

ятлă илемлĕ çĕнĕ фильм-спектакль кăтартма пуçлаççĕ.

Спектакль лартаканĕ — Ленинградри М. Горький ячĕпе тăракан драма театрĕ.

Спектакль режиссерĕ — И. Ефремов.
Фильм режиссерĕ — Я. Фрид.
Фильм художникĕ — В. Савостин.
Композитор — В. Пушков.

Рольсене выляна артистсем:
З. Карпова, А. Мазаев, В. Кибардина, В. Полицеймако тата ыттисем те.

Фильма Ленинградри Ленин орденлĕ «Ленфильм» ӳкернĕ. 1953 çул.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, [illegible] пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-87, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

Типографи № 1 Чувашполиграфиздата.

Тираж 20.000 экз.